КАЛКĂН №:11

НОЙАБĔР 1935 çул

Уйрăм № хакĕ 25 пус

КУЛЬТУРЛАНАÇÇĔ

— Атте, есĕр йестествознанипе хăш темă патне çитнĕ?

— Сирĕн кăнтăрлахи 5-мĕш класран йулмăпăр-ха çапах! Епĕ вĕренетĕп-ха: аҥҧупа мĕн тăвăпăр вăт?..

— Епĕ кăнтăрла вĕренмелинче, есĕ каçпа вĕренмелинче. Анне, еплин. „заочник“ пултăр. Епĕ ăна ямăртăва чĕнетĕп, букçира илетĕп.

Ĕмĕр пурăн—ĕмĕр вĕрен

Хуракасси йатлă чăваш йалĕнче çуралнă Еремей Ваçикăв авалхи саманари вĕрену çулйĕрĕ тăрăх пĕтĕмĕшпех утса тухнă. Малтан вăл хурсем кĕтсе пурăннă,—ку ĕнтĕ уншăн пĕрремĕш сыпăклă шкул пулса тăнă. Кайран сысна кĕтсе пурăннă,—ку уншăн иккĕмĕш сыпăклă шкул пулнă. Вĕренессе вăл пит аван вĕреннĕ, амăшĕ ăна хăш кун пĕрер, хăш кун икшер çупкă çитернĕ.

Вунă çул тултарсан, Еремей сысна кĕтӳçинчен сурăх-ĕне кĕтӳçи пулнă,—ку ĕнтĕ уншăн виççĕмĕш сыпăклă шкул пулса тăнă. Вунпилĕк çулта Еремей чи аслă наукăна—хресчен мĕн пур ĕçне тума вĕренсе çитнĕ,—ку ĕнтĕ уншăн университет пулса тăнă. Кăштах вăхăт иртсен, Еремей „профессăр“ пулса кĕçĕн тăванĕсене хăй мĕн пĕлнине пĕтĕмпех вĕрентсе пыма тытăннă. Çирĕм çулта Еремей авланнă. Тепĕр çултан тĕнче вăрçи пуçланса кайнă. Еремейа Хыркассинчен империалисăм вăрçине кайса йун тăкма хушаççĕ. Еремейăн каллех çĕнĕ наукăна азбукинчен пуçласах вĕренме тытăнмала пулнă. Авалхи ваттисем: ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен, тесе тĕрĕс каланă çав.

Новобранĕц пулнă Еремей „шаг на месте!“, „на плечо“ тенĕ командăсене тем пекех лайăх вĕренсе çитернĕ. Патша таврашĕсене, аслă, кĕçĕн, чи кĕçĕн кҫаçсене мĕнле чĕнмелине хут çине пăхмасăрах калама вĕренсе çитнĕ. Унтан Еремейа Горох патша чухнехи кивĕ берданкă тыттарнă та Германи çĕршывне вăрçса илме хушса кăларса йанă. Виçĕ çул вăрçнă Еремей, кайран Раççейре революцци пулнă.

Унчен мĕн чухлĕ вĕреннĕ пулин те, Еремейăн вĕренме çĕнĕрен тытăнмала пулнă.

Çакăн пек политграмăтăна Еремей лайăх ăнланса илнĕ: Антантă, империалиссем, йун ĕçекенсем, мăн хырăмлă кадетсем, тата ытти министăр тенисем вĕçĕмсĕрех вăрçасшăн, анчах хăйсем фронта кайасшăн мар, социал-икĕпитлисем, тепĕр майлă каласан, ес-ерсемпе меншевиксем мăн хырăмлисен йытти пулса ĕçлеççĕ. Пĕр боҫшевиксен кăна питĕ тĕрĕс программă.

Боҫшевиксем йертсе пынипе пирĕн Еремей рабочисемпе ĕçхресченĕсемпе пĕрле Керенскине çурăмĕнчен айалтарахран тапкă парса Парижа кив йапаласемпе услам тума кăларса йанă. Пĕтĕм влаç советсем аллине куçнă. Еремей тăван йалне тавăраннă.

Киле тавăрăнсан урине салтса сырма çеç ĕлкĕрнĕ, вăрçă тухни çинчен хыпар илнĕ. Рабочисемпе хресченсен влаçне пĕтерессишĕн буржуйсем вăрçă пуçласа йани çинчен илтсессĕн, никам хушмасăрах Еремей фронтран илсе тавăраннă винтовкине илнĕ, икĕ пачкă махоркă тата тăварпа çăкăр чикнĕ те фронта тухса кайнă.

Фронтра генералсене хирĕç вăрçмала пулнă унăн. Малтан вăл Колчак йатлă адмиралпа вăйлă вăрçнă. Колчак çинчен çакна калама тивет: Колчакăн галифи Францирен кӳрнĕскер пулнă, мундирĕ—Йапонирен, тупписем—Англирен, снарйачĕсем—Америкăран, шоколачĕ — Швейцарирен, ерехĕ—Италирен.

Еремейăн пĕтĕм амуницийĕ те „русская трехлинейная винтовка“ текенни çеç пулнă.

Колчак адмирал çĕр çинчи патшалăхшăн ва[...]нă, анчах çĕр çинчи вырăнне „çӳлти“ çук пат[...]лăха кайса вырнаçмала пулнă,—çапла пĕчĕк [...] йăнăш туса хунă мĕн вăл: çӳлтипе айалти пат[...]лăхсен адрĕсĕсене арпаштарса йанă.

Колчака тĕп туса хунă хыççăн, Еремей винт[...]кине йăтса Деникина хирĕç кĕрешекенсене пул[...]ма кайнă.

Деникин тени Мускав çинчен шухăшласа ăн[...] кайнă.

— Парăр мана Мускав! Парăр!—тесе вĕçĕмсĕ[...] кăшкăрнă хăйĕн генералĕсене.

Ăна адйутантсем ăса кĕртме тăрăшнă:

— Вашĕ превосходитĕлствă,—тенĕ,—Муска[...] çанталăк ырă мар. Тен Крымрах йулсан аван? Кры[...]ра ăшă, чечексем пур, сывлăш уçă.

Çук. Кутăн генерал, „попкă-дурак“ пекех хăй[...] пĕрре вĕрреннĕ „Мускав, Мускав“ тенĕ сăмахĕсе[...] çеç каланă.

—Мускав, Мускав, виç ернере парăр мана Муска[...]

Адйутантсем:

— Так точно... ваш... диц... рады стараться, те[...]

Уйăх иртнĕ. Деникин адйутантсене:

— Ну, мĕнле есĕр, шăпăрлансем, Мускава и[...] паратăр-и мана хăçан та пулсан?—тенĕ.

— Так точно... ваш диц... Епĕр сана ваҫ[...] Мускавра Моçелпром ресторанĕнче кăнтăрла[...] апат хатĕрлеме, Тихăн патриарха молебĕн ту[...] заказ патăмăр. Ан шиклен!—тенĕ.

Деникин тепĕр уйăхран каллех: трам-арарам[...] там там, Мускав кирлĕ!—тенĕ.

— Так точно! Рады стараться!—тенĕ ылт[...] пакунлă тарçисем.

„Так точно, так точно тенĕ, ĕçĕ—„никак н[...] пулса тухнă.

Деникинăн вара кăнтăрлахи апат Париже ка[...] çимеле пулнă. Кайала вăл тавăрăнман. Дени[...] хыççăн Врангĕлĕн те çавăн пек Мускав курма[...]рах хăйамата çитичченех кайса çухалмала пул[...]

Еремей Махно баҭкăна та курнă. Махнон [...] халапĕ çакă пулнă: кам ĕçмест (ерех)—вăл çиме[...] Долой совет аппарачĕ,сывă пултăр самогон ап[...]рачĕ. Хамăрăн çынсене бубни козăр, советс[...] хирĕç—пикки, коммуниссене—черви. Махно б[...]кăна—дамăсем, кулаксемпе бандитсене—тузс[...] ĕççыннисене—короҫсем.

Еремей ăна хирĕç çапла ответ панă:

— Пирĕн лозунг: кам ĕçлемест—вăл çиме[...] Пирĕн козăр—хĕрлĕармейцăсен çăлтăрĕ. Са[...] картна витетĕп,—тенĕ.

Чăнах та Махно картине витсе хунă. Ма[...] Румыни министăрĕсем патне тарса пытаннă.

Çемен Петлӳра, Пилсудски... Çемен Петлӳ[...] çĕр те пĕрремĕш хут йут патшалăх капиталисĕ[...] патне кайса сутăнмала пулнă, Пилсудскин Ере[...] пеккисемпе килĕшӳ догăвăрĕ тумала пулнă.

Çапла Еремей икĕ вăрçа вăрçса иртернĕ. Х[...] вăл, çĕр ĕçĕ тĕлĕшпе стахановĕц йатне илтнĕск[...] чаплă Осоавиахим ретĕнче тăраҭ, ĕçрен пуша[...] вăхăтсенче тимлесех хăй те çар ĕçне вĕре[...] ачисене те вĕрентет. „Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕре[...] тенĕ ваттисен сăмахне нихăçан та манмала мар[...] не асрах тытаҭ.

ВЫЛЬĂХСЕНЕ ÇИТЕРМЕ

Вăрнар зоотехникумĕн вĕренӳлĕ хуçалăхĕнче сурăх витин çивиттине начар çапса тĕшленĕ тырă улăмĕпе витнĕ. Çивитти çинче тыррисем шăтса тухса çăра калча пулса ларнă.



Управльайушчи Бархович:—Çитĕнӳсем пысăк: сурăх вити турăмăр. Çивитти çинче акмасăр-тумасăр тырă туса илетпĕр. Улăхтар ĕнӳна хăвăртрах, калчине ĕнене çитерсе самăртса çынсене тĕлĕнтер.

Вутпуççисем

◆Трак районĕнчи „Ванасар“ колхоз пысăк сăнавсем тума тытăнни палăрать: кантăр татнă чухне вăррине пит нумай тăкса хăварнă. Хĕлчен кантăр калчана ларчĕ. Халĕ колхоз председатĕлĕ çапла майпа акăннă кĕрхи кантăртан килес çул сӳс туса илессе ĕмĕтленет (Геомат Г.).

◆Иамаш йалĕнчи „Ударник“ промколхоз çумĕнче комсомол организаци пуррине Шăхасан райкомолĕнче ĕçлекен çынсем çеç пĕлеççĕ, Йамаш ĕççыннисем пĕлмеççĕ (нимĕнле кампанийе те хутшăмасть). Çулталăк ытла член укçисене тӳлеменни çинчен унти комсомол организацин çекретарĕ аван пĕлсе тăрать, анчах пĕлнине никама та каламасть. (Венамин Хунтер).

◆Анат Ачакри (Йетĕрне районĕ) „Çĕнĕ пурнăç“ колхозăн пахча-çимĕç усрамалине çенĕабĕрĕн пуçламĕшĕнче туса пĕтернĕ, çенĕабĕрĕн йулашки кунĕсенче ишĕлсе аннă. Епĕр тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, ăна тăвакан платниксен (Барышов, Маркунин, Фрол) аллисем—йăвăç, пуçĕсем тăм, пуç мимисем—пиçен (сийенлĕ курăк) мамăкĕ пулнă. (Иванчик).

◆ Хут начар пĕлекенсем, Первомай районĕнчи (Тутар республикĕ) çутпайне кайăр. Унта сире вулав çурт пуçлăхĕ туса йала йама пултараççĕ. Сирĕн пек пĕр Проскин хушаматлă хут начар пĕлекен çын ав Акрел йалĕн вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса чиперех шалу илсе пурăнать. (В. Иваӈук).

◆ Шор-Пайрашри (Трак районĕ) „Çăлтăр“ колхоз членĕсем хушшинче çитес çуркуннехи çуракине хатĕрленес ĕç калама çук лайăх пырать, тытса та чармала мар. „Çăлтăр“ колхоз членĕсем çуракине анчах мар хатĕр, вĕсем сĕлĕ вырма та хатĕрленеççĕ. Кăçал вĕсем 41 гектар çинчи сĕлĕне çуррине те хăй вăхăтĕнче вырăмарĕç. Çуркунне çитсен пĕлтĕрхи сĕлле вырма шутласçĕ, мĕншĕн тесен сĕлĕ хăмалĕ вырăнне симĕс калча шăтнă. Анчах хăш числара вырма тухасси паллă мар.

П. Ленскипе Шаç-Ваç.

П. ЗАМОЙСКИЙ

Майлаштарчĕç

(„Лапти“ романăн автăр пичете хатĕрлекен 4-мĕш кĕнекинчен).

Кункаçиччен çапнă ыраша каçхине вăтăр лавпа Алызовăна ăсатаççĕ. Часах ку лавсем çителĕклĕ марри курăнчĕ. Татах вунă лав уйăрчĕç, вĕсем те сахал. Кашни кун сахалтан та утмăл лав кирлĕ. Ума ыйту тухса тăчĕ—йе утпа ĕçлекен икĕ молотилкăна чарса лашисене пушатас, йе авăн çапассине чармасăр вăхăтлăха ырашне колхозрах хăварас. Район кăтарту пачĕ—авăн çапма чарăнас мар, лавсен шутне те чакармала мар. Ăçта хурас-ха тырра? Кулак кĕлечĕсене йусас—вăхăт кирлĕ, тата вĕсем пĕр вырăнта мар. Хуралçăсемех мĕн чухлĕ кирлĕ.

Вара Сотин правленине сĕнӳ пачĕ.

— Тырра чиркĕве тăкма лекет.

Ир ирех чиркӳн пĕр йенчи айакри алăкне уçрĕ те чиркĕве кĕчĕ, картузне те хывмарĕ. Иконсем, хоругвисем, хĕрессем хăйсен вырăнĕнчех тăнă. Сотина пур çветуйсем те ăна айăпласа мĕскĕнĕн ун çине пăхнăн туйаннă. Картузĕ пуçне мĕнле хытă пуснине кĕретĕнех туйса илнĕ. Темиçе хут хăй сисмесĕр картуз хывма алли çĕкленнĕ унăн, анчах хывас вырăнне ăна йе ĕнсе çине йе хăйаккăн лартнă.

Хĕлле кăмакисене хутман пирки чиркӳре хăш угодникĕсем пăнтăхса ларнă, хăшшисем çинчен ыранĕпе сăрĕ кайнă. Мачча тăрăх сарăлса тăран Саваофăн мăн сухалĕ кĕтесси тăкăнса пĕтнипе старик полевод çине усаллăн, шăртланса пăхнă.

Вара çав чĕлхесĕр çветуйсене хĕрхеннĕ çĕртен Сотинăн хăй кăмăлне хирĕçех вĕсенчен йĕрĕнес килнĕ, çилĕ килнĕ. Сурас та чиркӳрен тухса кайас йе халех пĕтĕм угодниксене çтена çинчен сĕтĕрсе антарас килнĕ.

Çийелтен пăхсан полевод лăпкă пек туйаннă, вăл колхозниксене ырашне хăш кĕтессе хумалине ĕçлĕн кăтартнă. Чиркӳ старăстин суту-илӳ сĕтелли пулнă йенне тăкма пуçласан авантарах, кайран тепĕр йенне сĕлĕ тăкас. Тараса виçине сулахайри клирăс умне лартас, сортировкисене—чан çапма хăпарнă çĕре. Иконĕсене чансем патне пуçтарса хурас, куç умĕнче ан пулччĕр.

— А хаӳ... турă çырлахтăр!—тесе пысăк икон патне пырса тăчĕ.

Ку художник кӳаç тумне тăхăнтарнă Леонид—великомученик сăнĕ пулнă. Çаваннăн, помешчик Леонид Иванович Владыкинский, садист, Солтычихăн паллă йăхĕ, карт вăййинчи шулĕр, картла выӳаса тăватă имени крепĕсле хресченĕсемпех илнĕскер, чиркӳ туса лартнă. Сăнне хулăн, çирĕп çыпăçтарнă хăмасем çине ӳкернĕ пулнă, сылтăм клирăс çтени çумне пăталаса хунă пулнă ăна. Тимĕç тунă пăтисем йăвăç çумне хытă тутăхса çыпăçса кĕрсе ларнă, Сотин ăна çтена çинчен антарас тесе мĕн чухлĕ тăрăшсан та лешĕ парăнман, шатăртатнă çеç.

Хумханса, Сотин картузне хыврĕ, çĕре пăрахрĕ ăна, çамкине шăлса илчĕ те пуртă тытрĕ. Кĕтессинчен хирсе хăй йенеле туртрĕ. Шăтăртатса Леонид вăрахăн çтенаран хăпана пуçларĕ. Мужиксем сыхланса хăйсен ытамне илчĕç ăна, кĕтессе лартрĕç. Иконă çапнă вырăнта çтена çинче хыр хăмасем те тутăхнă пăта шăтăкĕсем çеç йулчĕç.

— Ăçта вырнаçтарăр-ха ăна?—ыйтаҫ Афоӈкă.

— Ырашпа тулă хушшине уйрăм тума,—ответлет Сотин. Астуса илсе, айăпне сирнĕ пек пĕтĕм чиркĕве кăшкăрчĕ:

— Хăмасем пирĕн çук-и?

— Хăмасем çук,—ответлеççĕ мужиксем.

Икĕ колхозник кăраксем çинчен пăталанă пысăк христоса антараççĕ. Виççĕмĕш пысăк иконĕ—„турамĕш вилни“. Вăл мачча айĕнче пекех çакăнса тăнă, ăна илме пусма лартма тивнĕ.

— Пурте пурасем тума йураççĕ,—лăпкăн, хăйне хăй ӳкĕтлесе пулас, тепĕр хут калаҫ Сотин.

Хоругвисемпе пĕчĕк иконсем тата çтена çинчен мĕн илмели пур пурне те чансем патне тата проçвирнĕ пулнă çĕре куçарчĕç. Кунĕпе чиркĕве тасатрĕç. Каçхине лампă çуттипе „патша хапхине“, алтаре кĕмели ик йенчи алăкĕсене илчĕç. Паникадилăна илме Илле тимĕрĕçе чĕнчĕç.

Чиркӳре мĕн пулни çинчен хĕрарăмсем пĕлнĕ, анчах пĕри те пымарĕç. Хăшшисене Сотин урай çума пыма чĕнсен килĕшмерĕç. Хăй арăмне ӳкĕтлесе пăхрĕ,—лешĕ ним чĕнмесĕр йĕрсе йачĕ.

— Праскипе Тарйене чĕнес-и тен?—сĕнчĕ Афоӈкă.

— Çук, коммунискăсене ку ĕçе хутшăнтармăпăр.

— Мĕнле тăвас-ха? Хамăрăнах-ши? Пĕлместпĕр.

— Тупăн, мĕнле те пулсан,—сăмах пачĕ полевод.

Никифăр патне кĕчĕ. Унăн арăмĕ, Уӈйана килтех пулнă. Ун йенеле ытларах пăхса, вăл, çитеç кунсенчех иконсене валеçме тытăнасси çинчен калама пуçларĕ. Иконсене кам чиркӳре урай çуса параҫ, çав хĕрарăмсене анчах валеçе параççĕ. Леонидовск арăмĕсенчен никам та урай çума килĕшмесен кӳрĕш йалсене кайаççĕ, иконсене унта параççĕ.

Çăркаçаччен иконсене валеçсе парасси çинчен пĕтĕм йалĕпе сасă сарăлнă. Ирхине чиркӳ умĕпе тăтăшах хĕрарăмсем ирте-ирте çӳренĕ, хăшĕ чиркĕве кĕрсе пăхнă, анчах никам та урай çăвасăн пулман. Çав вăхăтрах Леонидовск приходĕнчи кӳршĕ йалсенче арăмсем хыпăнса ӳкнĕ. Иконсене пĕтĕм прихода мар, Леонидовскисене çеç парассинчен хăраса вĕсем хăйсен тӳпине çаклатма шухăшланă.

Кăнтăрлана Чиклипе Николайĕвкă йалĕсенчен арăмсем, темиçе карчăк витрисемпе урай мунчалисемпе чупса пычĕç. Леонидовскисем кăна курса хăйсем хускалса кайнă.

— Ей, хĕрарăмсем,—пĕлтернĕ вĕсем,—есир, мĕн? Пур çветуйсене туртса илсе пĕтереççĕ, пире йулмаҫ те.

— Тытăр витресем!

Пушара чупнă пек чупаççĕ пур йенчен те. Часах чиркӳ умĕнче хĕрарăмсен ушкăнĕ пухăнчĕ. Чиркӳ питĕрнĕ пулнă. Сотин патне чупса кайса килчĕç. Сотин ним чĕнмесĕр ку шавлă ушкăна пăхса çавăрăнчĕ те чиркĕве уçса пачĕ. Хăшшисем вĕрилле пуш витресемпе кĕрлесе кĕрсе тăчĕç,

камăн ăс çитни шыв илсе килнĕ, шыв сапса хăйсене вырăн йышăнчĕç.

Пысăк урайа хĕрарăмсем хăвăрт çуса тухрĕç. Алăри витресемпе вĕсем чиркӳ карти ăшне тăрса тухрĕç, иконсене валеçсе парасса тинкерсе кĕтеççĕ. Вĕсем Сотин вĕсене улталасран, куласран хăранă, анчах Сотин улгаламарĕ. Вăл кашнине чан çапакан çĕре чĕнсе мĕн алла лекнĕ иконсене пара пуçларĕ. Валеçсе пĕтерсен сисрĕ: хăш-хăш арăмĕсем илнĕ иконĕсемпе çырлахмасăр кăмăлсăр пулнă. Сотин çине мăкăртатса вĕсем унтах пĕр-пĕринпе улăштара пуçларĕç. Çветуйсене кашни хăй пек килĕштерет мĕн. Пĕрне Хусан турă амăшĕ килĕшнĕ, Сотин ăна Саровскăй старике тыттарнă, тепĕрне ылттăн çунатлă пирĕщти кăмăла кайнă, ăна илемсĕр, хулăм сăмсаллă Фекла мученицăна тыттарнă. Иконсен пысăкĕшне те пăхнă. Хăшне пĕрне пысăк маррисем йуранă, теприсене—пысăккисем. Пĕр карчăкне Пантелеймона тыттарнă, анчах карчăк хăйĕн пӳрчĕн калăпăшне астуса илнĕ.

— Ăçта мана кун пек идолпа? Унсăрăнах ниçта çавăрăнма çук.

Тавлашмасăр та иртмерĕ. Икĕ хĕрарăм лампадкисене уйăрайман. Пĕри вăчăринчен туртаç, теприсе стаканĕнчен. Вăчăри татăлчĕ кайрĕ.

— Мĕне кирлĕ ĕнтĕ мана ку вăчăра?—тĕлĕнет хĕрарăм.

— Пăруна кăкарăн,—ăс параççĕ ăна.

Пĕр çамрăк арăмĕ уйрăмах хоругвине пама ыйтаç.

— Мĕн тума вăл сана?—ыйтаç Сотин.

— Аври аван,—пытармасăрах калаç лешĕ.—Ăна сенĕк çине лартсанччĕ.

Хĕрарăмсенчен инçе мар çĕре тарăн путса кĕнĕ чан тăнă. Авдей амăшĕ ун патне пырса тăрса сăхсăхса илчĕ те кăвакарчăнсем ларса вараланнă вырăна темле ӳкерчĕк палăрнă тĕлтен чуп турĕ. Ачи пӳрнисемпе саспаллисем çине тĕксе сасăпа вулаç:

„Ман сассăм çывракансене вăрагаç, турă çуртне кĕл тума чĕнсе килти тертсенчен уйăрăлса турă çине пăхма хушаç пире".

— Мĕнле йака йурă, асанне!

— Еп сана, шуйттан çурине, парăп йурă,—иконпа ун çине хăмсарчĕ карчăк.—Е-ех, турă, пурăнса çитрĕмĕр. Миçе çул, аттемĕр, çакăнса тăтăн, супостатсене парăнтăн.

Сотин патне Алекçей пырса тăчĕ.

— Пурне те салатса пĕтертĕни мĕн?

— Ниçтан та хĕрарăмсене йурама çук. Кашнин хăйĕн йуратни. Тавар улăштарĕвĕ уçрĕç.

— Ахалех есĕ вăл ĕçпе чăрманнă. Кайаллах пуçтарса илес пулаç.—Хĕрарăмсем кусем калаçнине илтсе Алекçей çине çилленсе кăшкăрма пуçларĕç.

— Сире çветуйсем кирлĕ мар пулсан пире йурĕç.

— Кашнă çветуйшăн пилĕкшер çăмарта кирлĕ сиртен.

— Урай мĕншĕн çурăмăр?

— Ку сăнсемшĕн епĕр ахаль те пупсем патне нумай çăмарта йăтнă.

— Çук, пуçтарса илес пулаç. Тĕне сарма йурамасç,—терĕ те Алекçей кама та пулсан ку ĕçе тума пултаракан çынна шыранă пек çавăрăнса пăхрĕ.

Хĕрарăмсем Алекçейĕн хăйулăхне пĕлсе пĕрин хыççăн тепри васкаса вăшкăна пуçларĕç. Часах чиркӳ умĕнче мужиксем çеç тăрса йулчĕç.

Каç пулнă çĕре чиркӳ картине пĕр çĕртен сӳтрĕç, лавпа кĕме ирĕк пултăр, чăрмантаракан çирен йăвăç тĕмисене касрĕç, тараса виçи лартрĕç те таса урайне тырă тăкма пуçларĕç.

Клубран пĕр пилĕк кил урлă Алекçей хытă çухăран хĕрарăм сассине илтрĕ.

— Кунта ĕнтĕ çапăçу пулмала,—малтанах пĕлсе шухăшларĕ вăл.

Мирун групповод пӳрчĕ тĕлĕнче темиçе ача кĕпĕртетнĕ. Айаккарах, хĕрарăмсем малала мĕн пулассине тинкерсех кĕтсе тăраççĕ.

Çапăçу пулман, Мирун арăмне те никам та хĕнемен. Вăл хăй упăшки умне тăнă та сасăпа ӳленĕ, а лешĕ, çӳçĕсене арпаштарса йанă, кукленсе ларнă та пуртăпа темле тăват кĕтеслĕ хăмасене касса вакланă каска çинче.

— Мĕнле кăшкăрашу кунта?—ыйтрĕ Алекçей.

Плаки тата хытăрах ӳлесе йачĕ, предçедатĕле çаннинчен йарса илчĕ.

— Пăх-ха, Алекçей Матвейч, çăмламас ухмах мĕн тăваç. Çветуйсене пуртăпа ваклаç.

Каска кутĕнче пĕчĕк-пысăк иконсем выртаççĕ.

— Ей, тусăм, мĕн есĕ, кун пек аван мар ĕçе тытăннă? Кайар-ха клуба, ăмăрту çинчен калаçĕç унта.

Алекçейе лăпкăн итлесе Мирун çӳçлемес пуçне силлесе илчĕ те тепĕр хут ыйтрĕ.

— Ăмăрту çинчен тетĕн-и?

— Ну, да!

Тăчĕ, иконсем çине пусрĕ те, кăшкăрса йачĕ.

— Мĕнле, шуйттана ăмăрту! Есĕ пăх, манăн ухмаххи çветуйсен ăмăртуне пуçланă. Мĕн пур çтенасем çине угодниксене çакса тултарнă. Таракансем сахал пулĕ ха пирĕн, тата вĕсене йăвасем туса панă. Совет та йĕркесĕр хăтланаç—хĕрарăмсене иконсем валеçсе пана. А мĕн тăваççĕ вĕсем хĕрарăмсем? Çпекулăаци пуçласа йанă. Пĕр-пĕринчен çветуйсене сутса илеççĕ. Хушса парса улăштараççĕ, йе хăлха çине хăлха. Манăн хĕрарăм пуринчен те ухмахрах. Епĕ ун пуçĕнчен, хăт ылханлă пулам, пĕтĕм тĕнне мĕнне кăларса çапап!

Татах чăркуçланса ларчĕ, пурттине тытрĕ, çийелти иконне каска çине хучĕ те иккĕне çурчĕ.

Плаки çав тери тискерĕн çухăрса йачĕ, иконсене мар, ун пуçне пуртăпа касрĕç, тейĕн. Мирунăн çак ĕçне пăхса тăма аван мар пулнă Алекçейе.

— Йурамасç апла,—ун аллинчен тытрĕ вăл.—Тĕне хирĕç çын тупăнна! Санăн арăмна ăнлантармала, вăл иконсемпе ан чăрмантăр. Пуртăпа ăна ăнлантараймăн.

— Кама ăнлантармала? Хам арăма-и?—çăмламас питне çĕклерĕ Мирун.—Хăш вăхăтра манăн ун пек ĕçсемпе аппаланмала? А вăл мана, тӳрех калатăп, тарăхтарчĕ, сийен турĕ. Чо-орт!—сасартăк кăшкăрса пăрахрĕ Мирун арăмне,—санăн ирхи апат хатĕрлемеле, есĕ Николай угодниксемпе хăтланатăн, сухалне шăлса тасататăн. Кăнтăрлахи апатне хăвăртрах хатĕрлесчĕ, апла мар, есĕ турамĕшĕн куçĕсене тасататăн. Каçхи апат кирлĕ акă, пухăва каймала, а есĕ Владейепе чăрмав пуçланă. Çаклатса килнĕ вĕсене чиркӳрен. Пар сана хоругви, есĕ ăна та кĕтессе тăратăн. Паникадилăна та, пӳрт çи айне çаксан чармĕччĕ. Çук, пĕрне те лартмастăн. Пурте вут хутма кайаççĕ.

— Пăрах Мирун! Сут умĕнче хулиганствă тесе ответ тытмала пулĕ.

— Сут умĕнче?!—тĕлĕнсе тепĕр хут ыйтрĕ те Мирун çавăрăнса пăхрĕ.—Ак есĕ мĕнле? Сут умĕнче?

Пĕр аллине пуртине тытса, тепĕр аллипе, чăхха тытнă пек, турă амăшне тытса, вăл урмăшнă сассипе кăшкăрчĕ:

— Кай-ха ес, председатĕл...

Пуçне çавăркаларĕ, каласа хурасшăнчĕ те, тытăнса тăчĕ—... хăвăн ĕçсемпе.

Уйăп Мишши куçарнă.

Пурне те пĕлекен Ермолай

(А. Рыбкин йумахĕ)

Кирек кам та мĕн те пулин пĕлет. Пирĕн Ермолай пурне те пĕлет.

Кӳршĕсем:

— Ыран мĕнле çанталăк пулать?—тесе ыйтаççĕ унтан.

Вăл нимĕн шухăшласа тăмасăрах:

— Пĕлетĕп. Ыран вăйлă çăмăр пулать,—тесе хурать.

— Уйăх мĕншĕн çутатнине пĕлетĕн-и?

— Пĕлетĕп. Çутăран çутатать,—тет.

Çавăнпа ăна пурне те пĕлекен Ермолай теме тытăнаççĕ.

Ермолай пĕре арăмне калать:

— Мана, пурне те пĕлекенскере, суха туса пурăнни килĕшмест. Хулана кайатăп. Унта ĕçлеме çынсем нумай кирлĕ тесе калаçаççĕ. Мана хаваслансах йышăнса пысăк шалу парсах усрĕç.

— Хулана кайас умĕн çырма-вулама вĕренкелесен аван пулĕ, тетĕп. Шкула кайса кăштах вĕренкеле-ха.

— Манăн мĕн вĕренмели пур, епĕ пурне те пĕлетĕп,—тет арăмне хирĕç Ермолай.

— Апла пулин те, вĕренни ытлашши пулмĕ.

Шухăшланă, шухăшланă та Ермолай:

— Йурĕ. Вĕренсе пăхам. Арăм калашле, кăштаха вĕренни ытлашши пулмĕ,—тенĕ.

Шкула пырсан учитĕл:

— Цифăрсем пĕлетĕн-и есĕ?—тесе ыйтнă унран.

— Пĕлетĕп!—тенĕ Ермолайĕ.

— Саспаллисем?

— Саспаллисем те пĕлетĕп.

Учитĕл пичетленĕ пысăк „А“ саспаллине илнĕ те, ăна Ермолайа кăтартнă.

— Çакă мĕнле саспалли?

Пăхнă, пăхнă Ермолай, йулашкинчен:

— Саспаллисене пурне те пĕлетĕп, кăна вĕлерсен те ăс-тăна илейместĕп!—тенĕ.

Вара Ермолай вĕренме тытăннă. Вĕреннĕ, вĕреннĕ, кайран вĕренсе тухнă та хулана кайма пуçтарăнма тытăннă.

Хулана çитнĕ. Урампа пынă чухне пысăк çурт тунине курнă. Чи çӳлте платниксем пуртăсемпе шакканă, айалта, вĕсем айĕнче, ытти рабочисем кăткăсем пекех йăшăлтатнă.

— Ку ĕçе епĕ те пĕлетĕп,—шухăшланă Ермолай,—вилнĕ аттепе пĕрле ĕлĕк карта тытнăччĕ.

Платнике кĕрĕшнĕ. Арăмĕ патне йала хыпар йанă: „Пысăк стройкăра ĕçлетĕп, хам айра çĕршер рабочи тытатăп“ тенĕ.

Крахвине çыруне вуласа тухнă та, шухăшласа илнĕ: Ермолайа телей пулнă: тăруках ăна çав тери пысăк ĕçе шанса панă. Манăн та унран йулма йурамасть!—тенĕ.

Вара Крахвине вĕренме тытăннă. Колхозра унсăрăн пĕр ĕç те иртмен. Кăштах пурăнсан ăна председатĕле суйланă.

Ермолай пуртă илнĕ те, ĕçлеме кайнă. Деçйатник ăна кирпĕч хӳме патне илсе пырса каланă.

— Çакăнта çӳле хăпарса ĕçлемели карлăксем ту, анчах шанчăклă, çирĕп ту, ишĕлсе анмала ан пултăр,—тенĕ.

— Пĕлетĕп, туса парăп!—тенĕ те Ермолай, çийĕнчех тума тытăннă. Тункатасем лартнă, вĕсем çийĕн хăмасем çапса тыттарнă. „Шанчăклă пулчĕши, кӳр-ха сăнаса пăхам“ тесе карлăксем çине улăхса утса пăхнă. Виçĕ пусăм та кайайман—карлăксем ишĕлнĕ аннă. Рабочисем чупса пынă, ăна хăмасем айĕнчен сĕтĕрсе кăларнă та, пулăница ăсатнă. Ермолай тăна кĕрсен хăвăртрах киле çыру çырса çапла пĕлтернĕ:

„Стройкăра манăн асап курма тиврĕ, халĕ ĕç геройĕ пулатăп ĕнтĕ, кунран кун парне парасса кĕтетĕп. Часах ĕçлеме те тухатăп“.

Çыруне илсе вуласан, Крахвине упăшкине пĕр йенчен хĕрхеннĕ, тепĕр йенчен упăшкипе мухтанас кăмăл пулнă. Хăй çыру илнĕ хыççăн колхоз ĕçне тата ытларах, пĕтĕм чунтан парăнса ĕçлеме пуçланă. Çапла ĕçленипе хăйĕн колхозне чи малти вырăна кăларса тăратнă, хăй хисеплĕ çынсен хĕрлĕ хăми çине ӳкнĕ.

Пулницăран тухсан, Ермолай ĕç шырама кайнă. Савăт умĕн иртсе пынă чухне пĕр пĕлтерӳ çакăнса тăнине курах кайнă: „Хуралçăсем кирлĕ“ тенĕ.

— Ку ĕçе епĕ те пĕлетĕп. Кайса кĕрĕшес!—тенĕ.

— Хут пĕлетĕн-и?—ыйтнă унтан савăт дирекцийĕ.

— Пĕлмесĕр!—тенĕ Ермолай.

Вара Ермолайа будка илсе пынă та каланă:

— Çакăнта лар та, савăта йут çынна никама та ан кӳрт. Пропуск пуррине кӳртме пултаратăн, пропуск çуккине никама та ан кӳрт.

Çакăнтан кайран Ермолай будкăра хурал ларма тытăннă. Арăмĕ патне çав куннех çыру çырса йанă:

— Халĕ мана çăмăл ĕçе куçарчĕç. Савăтри мĕн пур ĕçсене илсе пыратăп. Ман ал витĕр кунне пиншер рабочи тухать.

Ай-ай Ермолай! Хăлат пек çӳлеле вĕçет. Манăн та упăшкаран нумайах кайа йулас марчĕ,—тенĕ вăл çырува вуласа тухнă хыççăн.

Пĕтĕм тимлĕхне пухсах ĕçлеме тытăннă хăй. Крахвине йачĕ пур çĕрте те кĕрлеме тытăннă. Крахвине çинчен хаçатсенче çырнă. Нумай та вăхăт иртмен, Крахвине районри мĕн пур колхозсене йертсе пыраканни пулса тăнă.

Крахвине ĕçлеме района тухса кайсан, вăл колхоз колхозникĕсем, халĕ ĕнтĕ председатĕле кама лартас тесе, питĕ пысăк шухăша кайнă. Çавăнтах Ермолайа аса илнĕ. „Вăт ăна председатĕле лартасчĕ. Анчах ăçтан ĕнтĕ ăна çара алăпа пырса тытăн. Ун пек пысăк вырăнта пурăнаканскер, кунта килес çук ĕçлеме“, теççĕ. Çапах Ермолай патне çыру йарса пăхма шут тытнă...

Колхозниксем йанă çырува вуласа тухнă хыççăн, Ермолай акă çапла шухăшласа илнĕ:

— Манăн мĕншĕн колхоза кайса председатĕл пулас мар-ха? Чаплă çын хисепĕнче тăрăп...

Ермолай колхоза таврăннă. Хăй мĕн курнилтни çинчен каласа панă:

— Мансăр вĕсен пĕр ĕç те пулса пымасчĕ. Пурте мана: Ермолай, каласа пар-ха мĕнле тумала çакна, теччĕç. Йулашкинчен чи асли пулма суйларĕç—пĕтĕм савăта тытса пыраканни туса хучĕç. Савăтсенче рабочисем вунă пин ытла. Кама кĕртес тенĕ çавна кĕртетĕп, кама кĕртес кăмăлăм çук—ăна кайала тавăрса йаратăп,—тесе каппайнă.

Колхозниксем итленĕ, итленĕ те: Ай-ай, Ермолай! Пултарат!—тенĕ. Вара ăна председатĕле суйланă.

Ермолай выльăх картине пынă та, труках йĕркесĕрлĕх пуррине курнă:

— Ку мĕнле йапала? Ĕнесене мĕншĕн кăкарнă? Ĕне йăтă мар, ăна кăкарса усрама йурамасть. Халех салтса йанă пултăр!—тенĕ.

Выльăх пăхаканни темĕскер каласшăн пулнă та, анчах Ермолай:

— Мĕн? Мана вĕрентес тетĕн-и? Кунта кам хуçа? Мĕн каланине итленĕ пултăр!—тесе кăшкăрса тăкнă.

Кăкарăнса тăракан икçĕр ĕнене салтса йарса ирĕкĕн çӳремеле тунă. Выльăх картинче ĕне мĕкĕрнĕ сасăсем çеç илтĕнсе тăма тытăннă. Ĕнисем чупнă, çимен, ĕçмен, тĕкĕшнĕ.

Ермолай клуба кайнă та, унта та йĕрке çуккине курнă: ачасем ройаль калана, вĕреннĕ.

— Мĕнку? Ройаль калатăр. Кам сире хаклă музыка калама хушрĕ? Çĕмĕрес тетĕр-и? Чарăнăр! Еп хушатăп!

Учительницă хирĕç темĕскер каласшăн пулнă, анчах Ермолай ăна кăшкăрса тăкнă:

— Мĕ-ĕн... мана вĕрентме... вĕреннĕ çынна вĕрентмеççĕ!

Ройале питĕрсе илсе çăрауççине кăсйине персе чикнĕ. Темте пĕр туса пĕтернĕ темиçе кун хушшинче.

Ермолай пĕр ирхине хулана тухса кайнă. Васкаса тухса кайнипе, документĕсене килех манса хăварнă. „Йурĕçке, документсăрах мана хулара пĕлĕçха“ тенĕ. Çитсе кĕнĕ. Пĕр учреждение кĕрсессĕнех:

— Епĕ—Ермолай!—тенĕ.

— Ермолай! Ун пек çынна пĕлместпĕр.

— Пурне те пĕлекен Ермолай, колхоз председатĕлĕ.

— Пурне те пĕлекен Ермолай. Ун пек çын пурине перремĕш хут илтетпĕр.

— Ара, епĕ Крахвине упăшки пулатăп.

— Крахвине упăшки? Такçанах çапла каламалаччĕ. Крахвинене пĕлетпĕр, лайăх работник... Ну, лар та, каласа пар мĕн çĕнĕ хыпар пур колхозра?

Вара çавăнтан Ермолайа Крахвине упăшки тесе чĕнме пуçланă.

Колхозниксем, Ермолай хулана кайсан, пуçтарăннă та, ĕçсем питех маррине кура, Ермолайа вырăнтан кăларса, çĕнĕ председатĕл суйланă.

Хуларан таврăнсан, Ермолайа çĕнĕ председатĕл суйлани çинчен каласа пĕлтернĕ. Ермолай:

— Манăн мĕн тăвас-ха апла? тенĕ.

Ермолайа мĕнле ĕç шанса парасси çинчен пур колхозниксем те шухăшлама тытăннă. Пĕр кун шухăшланă, тепĕр кун... Тем чул шухăшласан та Ермолай мĕнле ĕçе тĕплĕн туса пыма пултарассине шухăшласа тупма пултарайман. Ермолай хăйĕн йăлисене пăрахсан тин колхоза йурăхлă çын пуласси курăнса тăнă.

Уçăп çӳревĕ

Хăшпĕр районсенче работниксене тăтăшах вырăнтан вырăна куçарса пырса ĕçлеме памаççĕ. (Хаçатран).

Питĕ паттăр çын вăл, пирĕн Уçăп,
Ыр хыпар çеç ун çинчен:
Партизан отречĕн пуçĕ
Пулнă граждан вăрçинче.

Йалсоветăн пуçлăхне
Лартрĕç Павăл Уçăпне.

Пачĕç пирĕн Уçăпа мăн преми.
Тивĕç Уçăп, памала.
Пирĕн Уçăп—йал илемĕ,
Вăл илемлетет йала.

Вăл ĕçленĕ Мăн йалта
Пĕтĕм ĕç пулаç малтан.

Вăл ĕçлерĕ, сывăрма пĕлмерĕ,
Прорывран кăларчĕ Мăн йала.
Ах, нумай вăл ĕçлеймерĕ,
Района ун каймала.

Шел. Ăна виç уйăхран
Илсе карĕç Мăн йалтан.

Уçăп пулчĕ хулара та пуçлăх,
Пуçлăх пулчĕ вăрманта.
Тăрăшаç ним çывăрмăсăр
Уçăп—
Прорыва пĕтермеле унта.

Йĕркелерĕ те ĕçе,
Вăл РĔК-е отчот леçет.

Пăхрĕ куçлăх витĕр
председадĕл
Пирĕн Уçăпа самант.
— „Есĕ, Уçăп пултаратăн,—
Терĕ вăл,—савап сана.

Урăх вырăна сана
Куçаратпăр ыранах.
„Мы в порядке дисциплины
Назначаем Вас в совхоз“...
Мĕн тăвас ĕнтĕ халь çынăн,
Килĕшет вăл: кайас хавас.

Кăларас пулаç ыран
Совхоза та прорывран.

Уçăп совхозра ĕçлет--директăр,
Пур ответлăх—Уçăпра...
Прорыва вăл пĕтерет те—
Каймала ун совхозран.

Тепĕр вырăнта прорыв—
Ав, çĕрет пĕр колхоз тырри.

Вăл çӳрерĕ пур çĕрте те.
Уçăп ывăнса çитет.
— Мĕншĕн есĕр, çӳрететĕр,
Ĕçлеме памастăр, тет.

Уçăп хурланаç пайан
„Прорывра пайан Мăн йал“.

В. Пукаш.

Лапра-çĕпре

Хĕрлĕ Чутай лапра-çĕпререн пуйан. Кĕрхи çанталăк. Кашни кун тенĕ пек йĕпе çăмăр чашлаттараť. Йулашки кунсенче асра питре хушăран йур та вĕçкеле пуçларĕ. Урам хушшинче лапра-çĕпре кĕсел пек йĕпресе выртаť. Ни урапапа, ни çуран тенĕ пек, тухма-кĕме канçĕр çулйĕр Чутайра...

Лапра-çĕпрере лăчăртатса çӳреме кансĕр ĕнтĕ. Ку тĕлĕшпе тĕрĕссипех, ним сăмахсăрах, пур те килĕшетпĕр. Çӳремели канçĕр... çулйĕр тĕлĕшĕнчен кĕрхи вăхăт никама та пăхăнмаст, пĕтĕм тавра кĕсел пек çăрăп, тенĕ пек аташса, çăмăр çине çăмăр, лапра çине пылчăк хушсах тăраť. Пулаť вĕт тулăксăр, йĕркесĕр йĕпе кĕркунне...

Ну, калăпăр, кĕркунне капла хăтлантăр: çăмăр та çăмăр, лапра та çĕпре. Кашни кун йĕпе çине сапа, тейĕпĕр. Анчах, кĕркуннехи йĕпе-сапа, лапра-çĕпре урамра анчах кăна мар-ха. Ку лапра-çĕпре урамра канлĕн çăрăлса выртнипех, çанталăк сивĕтсен шăнса ларнипех килĕшмен, хăйаматскер... Ку лапра-çĕпре Хĕрлĕ Чутайри райсойуза, столовăйне тата пекарнине чăрсăрланса кĕрсе кайнă та, ĕçсем хушшинче те „епĕ, кĕрхи лапра-çĕпре, кунта хам хуçа!“ теме пуçланă.

Кунпа та килĕшсе çураçса тăман: вăл лапра, кунти ĕçлекен хăшпĕр „чынлă“ çынсен пуç мимисем хушшине тулса вĕсен пуçĕсенче миме вырăнче ĕçлеме пуçланă. Вот уш тамаша!.. „Чынлă“ çынсемех хăйсен пуçĕнчи мимесене отпуска йанă та унăн вырăнне пуç тенĕ корапкăшне çав кĕрхи лапра-çĕпрене тултарса кисрентерсе çӳреççĕ.

Каласан, тен, ĕненмĕр... Лапра-çĕпрен кун пек хăват çук тесе, тен, иккеленсе тăрăр. Апла ан пултăр тесе ку лапра историн страницисене уçар. Ку истори çинче чи малтанах сĕмлĕ, мăнтăрка кĕлеткелĕ райсойуз пуçлăхĕ Антонăв тухса тăраť.

Çав асăннă Антонăв пекарнине приказ параť:

— Çăнăх çук... Лапра-çĕпре вăхăчĕ... Çăнăх кӳме майĕ çук... Ларйокра çăкăр сутас çук.. Пĕтĕм çăкăра столовăйне парăр,—тет пекĕре.

— Аха, йураť!.. Ларйок пушă лартăр еппин,—теççĕ те ларйок алăкĕ çине мă-ă-нă çăраççи çакса хураççĕ.

— Ку аван... Ку вăхăтпа усă курма пулаť,—тесе столовăй пуçлăхĕн шухăшĕ хăйĕн складĕнчи кăвакарнă вир кĕрпи çинчен шухăшлама пуçларĕ. Унăн шухăшĕ, калас пулаť, тӳрех „практически“, утăм турĕ. Пуçĕнче утăм пулчĕ унăн. Пуçĕнче утăм пулнипе усăнса аннă сăмси татах кăшт усăнчĕ те хывси çийĕ мăкăрăлса ларчĕ. Вот уш сăмса!.. Ку сăмса чăнахах çĕрĕк-марăк шăршисене пухса расчот тума пулăшаť ăна.

Çавăнтах вăл йăшка, пăтă пĕçерме приказ пачĕ те хăй мĕнӳ çырса лартрĕ:

„Йăшкапа пăтă пĕр порци—1 т. 20 пус.

(Суп с кашей—1 р. 20 коп.)“.

Мĕнӳ çырнă хута Горбунова буфетчике парса:

— Ларйокра çăкăр çук. Пĕтĕм çăкăр кунта килет. Шӳрпе уйрăм сутмастăп, „обйазатĕлнă“ пăтăпа,—тесе çĕрĕк вир кĕрпи пăттине „оборота“ йачĕ.

„Çийĕç, етем сысна мар!.. Тиркемĕç... Тиркешсен шӳрпе те, çăкăр та çук,—тесе хăйĕн ăсĕнчен тĕлĕнсе савăнса кулса йачĕ.

— Ларйока питĕрнĕ. Çăкăр çук. Çимелинчен антрарăмăр. Аťа хăť столовăйне кайар, тесе Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулран тухса столовăйне çитрĕмĕр.

— Апат пур-и?

— Пур... Пăтăпа шӳрпе 1 тенкĕ те 20 пус.

— Пăтти йăпăх, ан ил,—тет мана йулташ.

— Пăтăсăр шӳрпине те памастпăр, çăкăр та сутмастпăр...

— Пăттине кăвакарнă кĕрперен пĕçернĕ...

— Апла пулсан ан çийĕр. Вăйпа çитерместпĕр.

— Ну йурĕ, пăттине те пар. Укçине илех еппин,—тесен пире буфетчик талон пачĕ, 300 грам çăкăр турттарчĕ. Шӳрпине çирĕмĕр те пăттине „заведуйушчи çитĕр“ тесе лартса хăвартăмăр.

— Аťа-ха, Антонăв патне кайса пăхар... Столовăйĕнче çăкăр нумай. Ӳкĕте кĕрсе пĕрер кило тен суттарĕ? тесе Антонăв патне пыратпăр. Калатпăр. Йăлăнатпăр. Учитĕлсем... тетпĕр.

— Çăнăх çук... Çăкăр сутмастпăр... Халь ирĕклĕ сутă... Учитĕлсемшĕн уйрăм снабжени çук... Столовăйĕнче çиме пултаратăр!—терĕ те Антонăв калаçмарĕ те, „кайăрах“ тесе аллине сулчĕ.

Кăмăл хуçалчĕ. Килтисем çăкăрсăр. Антонăв итлемест. Лапра-çĕпре, Чутайа çăнăх кӳме майĕ çук.

Профсойуза çитетпĕр. Çăкăр... тетпĕр. Прокурора чĕнетпĕр... Пулăшу кĕтетпĕр... Прокурор ку ĕçе тĕрĕслет те 40 килограм учитĕлсене çăкăр сутма хушаť.

Савăнатпăр... Пулăшрĕ... тетпĕр...

Анчах хайхи Антонăва тĕл пулатпăр та, Антонăв хайарланса:

— А-а... бузит тăватăр... Кăаузниксем, виш есĕр, тупăннă учитĕлсем!.. Прокурор патне кайса мана айăплаттарас тетĕр-и?—тесе уçалнă кăмăлĕсене хуçрĕ...

Хĕрлĕ Чутайра кăçалхи лапра-çĕпре çавăн пек истори çырса хучĕ.

Калай.

Урпа тухнă

Карикасси йалĕнче (Йетĕрне районĕ) халăх çурчĕ тĕлĕнче 5 минут хушши çĕр чĕтреннĕ пулмала: çурчĕн маччи ишĕлсе аннă. Чĕтренӳ халăх çурчĕ тĕлĕнче çех пулса иртнĕ пулмала, урăх çуртсем ниçта та йăтăнса анман.

Тата иртнĕ çулта та çак вырăнта çавра çил тухса халăх çурчĕн çивитине вистесе кайнă (халĕ те çивитисĕрех лараť). Кăçал çулла „çил ачи“ çурчĕн чӳречисене силлесе çĕмĕрсе тăкнă (çурт ку таранчен те чӳречесĕр шăхăрса лараť).

Ку çурт çине йал уполномочăннăйĕ Макçимăв та куçне уçса пăхаймаст, мĕншĕн тесен куçне „урпа“ тухнĕ.

Кĕç. Манттай.

ЙЕЛИСАР

Ухсай Йаккăвĕ.

Ылттăн тусăм, сар хĕвелĕм.
Саншăн илтĕм шурă хут,
Хуратса çырас-ха терĕм.
Шухăшларăм хутран хут.

Пурăнатăп ырă сывă
Хам çуралнă йалăмра,
Таврари—Силпи çĕршывĕ
Картинкка пекех умра.

Пашалу пек сарă çулçă
Вĕçекен ăшă кунра
Çырăва çырассăм пулчĕ
Пăр пек сивĕ хыпара.

* * *

Кӳршĕри Кĕркке Кĕçтукĕн
Йелисарĕ гражданин
Ухмаха тухаҫ-и, çук-и,
Калама питех те хĕн.

Калта пек йем-йешĕл, сивĕ,
Çĕр çăтманĕ, ерехе,
Ĕçсенех, йанраҫ сасси вĕт,
Пурăнăç пит ĕрехет*

Трактăртан хăранă ут пек
Сыннăн куçĕ ĕрехет,
Çавăнпа ĕçеççĕ пуҫ тек
Хĕрĕх градăс ерехе.

Ех, хайлалă ӳсĕр шухăш
Сын пуçне йарса тытаҫ,
Сырлансем пекех вăл шухă
Урлăн-пирлĕн йавăнаҫ:

Генри Форд пек пуйан уйăх
Сапĕ мĕлйуншар укçа,

Ту пек пысăк кĕмĕл тупăн,
Тăр ха кăсйăна уçса.

Маччари сар таракан та
Курăнаҫ-и ылттăн пек?
Çинчĕк улăм пулĕ кантăр,
Пылчăк, пул саттин кĕпе.

Шухăшланă, уй-уйланă
Йелисар пичче пĕччен,
Ĕçнĕ, ĕçнĕ те йурланă
Карланкийĕ типиччен.

Килĕнче çук çын та унăн,
Колхозра пыраҫ ака,
Вăл тавсйе! тесе тав тунă,
Мăрăлти ват кушака.

Кушаккийĕ шăннă ахăр,
Кăмака панче хĕрет,
Ерехе сыпса пăхмасăр,
Шăшийе тытасчĕ тет.

Урайне анса çӳрерĕç
Икĕ ротă таракан,
Чан-Кай-Ши пек офицерĕ
Утрĕ пуринчен малтан.

Тăкăннă ерех пĕр кӳлĕ
Хĕррине пырса çитсен,
Шăрăшларĕç—пĕлчĕç пулĕ,
Кайрĕç çаврăнса вĕсем.

Тĕлĕнсе ăсран тухан тăр,
Кӳршĕ çыннăм Йелисар.
Кушакку та, таракан та
Ĕçеймерĕç. Тутлă мар.

Пĕр пăван кăна тутанчĕ,
Чӳрече çинче сĕрлет.
Йелисар пекех йăванчĕ
Месерле кайса ӳкет.

Йелисарăн пархатарĕ
Пĕтĕмпех çухалнă тет,
Ывăлне çапма пуçларĕ,
Арăмне тытса хĕнет.

Ухватпа çапса вĕçтерчĕ
Вĕрекен сăмавара,
Кантăка ватса, ун кранчĕ
Сирпĕнсе кайаҫ вара.

Кĕпине çурма пуçларĕ —
Пурне те çап, çĕмĕр, хир!
Алăка пырса шаккарĕ
Ак сасартăк бригадир.

Йелисар йулса сехресĕр,
Сикнĕ те тĕпсакайне,
Ĕçнĕ, нимĕскер чĕнмесĕр,
Литăр тĕпĕ ерехне.

Çавăнтан вара тапратнă
Хĕрсе тек йурлама,
Ывăнсан, тинех лăпланнă,
Тытăннă тет çывăрма.

Автансем виçшер хут ирĕн
Авăтсан, питех те ир
Ĕçлеме кайаççĕ пирĕн,
Чĕнме пынă бригадир.

Йелисар ăçта?—ыйтсассăн,
Илтĕннĕ сасси çинçен:
Еп кунта-ха, мухмăр манăн,—
Тенĕ тĕпсакайĕнчен.

Ку хыпар кĕрхи çилсем пек
Иртрĕ ӳт-тире тивсе,
Тупа турăм тимсĕлсе еп
Нихăçан та ĕçмессе.

Ăслак-Пуç, 1935 ç.

* ĕрехет—аван, канăçлăн.

Йалкор йанă фото-ӳкерчĕк тăрăх.



«Пучах» колхоз членĕ Ф. Харитонăв. Лодăр. Пĕтĕмĕшпе 11,74 ĕçкунĕ тунă. Хĕл тăрăшинче мĕн чухлĕ çăкăр çийесси палла мар.

СТОЛОВĂЙРА

Бӳрократ: — Хăçан мана есĕ апат илсе килсе парăн? 10 минут кĕтетĕп.
Официанкă: — Ху мана учрежденире мĕн чухлĕ кĕттертĕн?

ТАКМАКСЕМ

Сăмса тутри тутăр-и,
Сăмса шăлма анчах вăл.
Кахал савни савни-и,
Намăс курма анчах вăл.

Вĕлтрен курăк усалли
Сат пахчинче кирлĕ мар.
Ĕçре усăк алăлли
Пир(ĕ)н хушăра кирлĕ мар.

Йăр-йăр йухан шыв урлă
Çапă хур та, каçса кай.
Тăшман выртсан çул урлă,
Тапса сир те, каçса кай.

Касин касчăр пилешне
Еп шыв сапса ӳстермен.
Найăнпала килĕшме
Анне мана ӳстермен.

Туран анаҫ тур лаша
Хăлхисене выртларса.
Трактăр пыраҫ шавласа,
Пур тăшмана хăратса.

Çинçе пилĕк авăнма,
Çивĕч çава ут çулма.
Хура хăма хурланма,
Хĕрлĕ хăма савăнма.

Машанăвă Таҫйанă.

КУЛАС КИЛЕТ

100 процент хутшăннă

— Пирĕн тĕнĕ хирĕç кружока çӳрекенсем йулашки кунсенче пĕтĕмпе 100 процент хушăнчĕç.

— Суйатăн.

— Суймастăп. Малтан епĕ пĕчченехчĕ, халĕ иккĕн пултăмăр.

Çӳлте

Чутай (Вăрмар районĕ) кооперативĕнче хресчене кирлĕ таварсем нимĕн те çук.

(Иљвас)

— Сирĕн йалти кооперативăн ĕçĕсем çӳлте тăраççĕ-и?

— Кооператив-и? Питĕ çӳлте сăрт çинче тăраť, анчах унта хресчене кирлĕ таварсем нимĕн те çук.

Атăçă

— Пирĕн атă çĕлекен Иванов киномеханика кĕнĕ те, ăна районрисем те паллакан пулнă.

— Ну?

— Кино кăтартма тытăнсанах, район çыннисем пурте ăна: киномеханик мар, сапожник килсе ларнă кунта, кино-лентăсем пĕрмайах татаť, тесе кăшкăраççĕ тет.

Прогулшчик

— Ей, Гаврилăв, ма черете пăхмасăрах кĕресшĕн тухтăр патне. Кунта йăвăр чирлисем пур. Вĕсем те черете кĕтеççĕ, есĕ...

— Йăвăр чирлисен тăхтама та йураť... Манăн пуçăм мухмăр пирки çурăлса анас пекех ыратаť. Бӳлетен илмеле. Черетре тăрсан вăл, шуйттан, ыратми пулĕ те, вара манăн бӳлетенсĕрех йулас пулаť.

Тĕшмĕш ача

Ку учебнике Книготоргăн хăш прикашчикĕ сутрĕ сана?

— Ватăраххи.

— Ай, унтан мар, тепринчен илмелеччĕ.

— Ма?

— Алли йăвăр унăн. Çенťабĕр уйăхĕнче математикă кĕнеки илтĕм те—пĕрремĕш четвĕртшĕн табĕл çине мана учитĕлсем математикăпа „плохо“ лартса пачĕç.

Волокитăсăр

— Мĕн есĕ 500 грам вырăнне 300 грам виçетĕн?

— Ыгти илес текенсене тытса тăрас мар тесе.

Çавăнпа палăрмасť

— Пирĕн предçедатĕле „Капкăн“ журнал çине „пакăлти“ тесе питĕ вăрăм чĕлхелĕ туса ӳкернĕччĕ. Вăл халь вăрăм чĕлхелĕ мар-иç?

— Ма? Ун чĕлхине „Капкăн“ çыртса татнă тенине илтмени вара ес? Çавăнпа вăрăмми палăрмасť.

Прогулшчик савăта пырсан

— Иванов, килтĕн-и? Ку уйăхра миçе кун прогул турăн?

— Приказ çине пăхмасăр пĕлместĕп.

„Начар“ репорťор

— Итле-ха, редактăр йулташ! Сирĕн хаçатра „Çĕнĕ хыпарсем“ пайĕнче ман çинчен „бӳрократ“ тесе çырнă. Тĕрĕс мар ку. Хирĕçетĕп.

— Каçарăр, тархасшăн! Пирĕн сотрудник кунта ĕçлеме пуçлани нумай пулмасť, çавăнпа та пĕлеймен ку вăл—çĕнĕ хыпар пулманнине.

Членсен пуххинче.

— Ăна прикашчикран кăларас. Лавкана пынă çынсемпе пит тӳркес чĕлхепе калаçаť, тата кунĕнçĕрĕн ĕçет.

— Суйа ку! Кунĕн-çĕрĕн ĕçнĕ пулсан ăçтан епĕ лавкана пынă çынсемпе тӳркесĕн калаçма вăхăт тупнă.

Шиклĕ шиклет

—Хăçан „Канаш“ хаçатра Иван Данилович Кузнецовăн „Чăваш бољшевиксен кĕскен çырнă историйĕ“ çапăнса пĕтет?

— Ма?

— Вăл истори çапăнма пуçланăранпа упăшкам çими пулчĕ, ырханланса карĕ. Ĕлĕк хăй националисла йухăмра пулнине Кузнецов йулташ архивран туртса кăларса историне кĕртесрен хăраť.

Пулĕ

— Есĕр хăвăр тунă йапаласен пахалăхне сăнаса пыратăр-и?

— Епĕ хам йенчен питĕ аван сăнаса пыратăп. Хам ал витĕр тухнисене сăнаса пăхмасăр нимĕн те йамастăп.

— Апла пулсан пĕлесчĕ—мĕнле савăтра çавăн пек ăнланулăн ĕçлетĕн есĕ?

— Сăра тултараканнинче.

Мунча пирки

Окťабĕр праçникĕ умĕнхи кунсенче Шупашкар хула мунчи, Водосвет шыв пăман пирки, ĕçлемерĕ.

— Мĕншĕн пайан мунча хупă?

— Шыва переучот тăваççĕ пулмала.

Ваттисем сăнани

Пушар. Икĕ хутлă çурт çунаť. Йĕри-тавра халăх чупаť, пушарниксем çуртра пурăнакансен йапалисене çăлаççĕ. Иккĕмĕш хутри пĕр чӳречинчен тĕтĕм çапăнса тухаť.

Унпа йунашар тепĕр чӳречинчен çытарсем, витĕнмелисем тата çав майлă йапаласем ӳкеççĕ. Ватă карчăк çӳлтен пăрахнă витĕнмелисемпе çытарсене ӳкнĕ çĕртенех тытса илет:

— Тăхлачă! — тесе кăшкăраť иккĕмĕш хутри чӳречерен хăрăмланса пĕтнĕ пит-куçлă çын.—Тĕкĕрне пăрахас-и?—тет.

— Пăрах. Ак çак çытарсем çине ӳкмеле пăрах.

Тĕкĕр, йăлтăртатса илсе, çытарсем çине мар, хыт çĕр çине ӳкет те чăнкăртатарса пĕтĕмĕшпех сапаланса кайаť.

— Ой, ачамсем!--тесе кăшкăрса йараť хайхи карчăк тĕкĕр татăкĕсене пуçтарма тытăнса.—Есĕр çамрăксем ваттисем сăнанисене ĕненместĕр. Тĕкĕр çĕмĕрĕлсен телей пулмасť, теççĕ ваттисем. Чăнахах ĕнтĕ акă манăн тĕкĕр çĕмĕрĕлчĕ те, пушарĕ те кунтах, пурлăхсăр йуласси те çитсе килчĕ. Ваттисем сăнанисем кирек хăçан та тĕрĕс пулса пыраççĕ вĕсем, пустуй ваттисем калани не ĕненместĕр есĕр,-- терĕ хăйĕн сапаланса кайнă йапалисене хăвăртрах пуçтарма тытăнса.

М.

Йурăсен ăмăртăвĕ

Хăшпĕр йурăсем пирĕн пайан „Капкăна“ лекрĕç. Çаплала пулчĕ-ха ку, ăнсăртран сиксе тухнă ĕç. Епĕр çĕнĕрен пĕр сотрудник илтĕмĕр. Вăл колхозсем тăрăх кайсан „Капкăна“ кĕме йурăхлă йурăсем пухса килнĕ. Пит те лайăх йурăсем тупнă мĕн хăй, анчах та, епĕр кадăрсемпе ĕçлеме пĕлменнипе пулас, пĕр инкек сиксе тухрĕ. Ку сотрудник пирĕн, халиччен хаçат-журналта ĕçлесе курманскер опытсăр пулнипе, йуррисене çырса килнĕ, вĕсене камне тата ăçта йурлăнине палла тума манса кайнă. Темле пулсассăн та пирĕн ку йурăсене кам та кам йурланине тупасах пулаť. Çавăнпа епĕр ăмăрту пуçласа йаратпăр. Çырса панă йурăсенчен 8 йурăран хăшне те пулин кам, ăçта, мĕн пирки, мĕнле мăйпа ăс çитерсе йурласа панă, çавсене тĕплĕн редакцийе çырса памала.

„Капкăна“ чи йуралă ответ параканне, вырăнти йĕркесĕрлехсем çинчен çырса пĕлтерекенне гонорар тӳлетпĕр.

Акă йуррисем:

Пахчаçăсен йурри

(„Çĕнĕ йал“ кĕввипе)

Панулми хурал тăмашкăн
Кăçал çинех тăтăмăр,
Сат пахчи каргийĕсенчен
Ал туйисем турăмăр.

Ку йурра ĕлĕкрех Вăрнарти выльăх чĕрлĕх техникумĕнче йурлакалатчĕç. Студенчĕсем мĕн пур картасене сӳтсе çунтарса пĕтернипе мухтанса кăтартатчĕç. Кăçал ку тĕлĕшпе чылай мала кайнисем те пур.—Камсем-ши?

Тасалăх йурри

(„Хусанăн хулинче“ кĕввипе)

Хусанăн хулинче ай мĕ-ĕн паха?
Чĕмпĕрĕн хулинче ай чĕ-ĕн паха.
Пирĕн кĕнчлерте ай мĕн паха?
Чĕлĕм тĕтĕмĕпе çӳп-çап паха.

Пиллĕкĕн

Шупашкар районĕн Сарапакассинчи вулав çурчĕ пуçлăхĕсем 1935-мĕш çул хушшинче пиллĕк хут улшăннă.



Сарапакасси вулав çурчĕн пуçлăхĕсем çакăн пек улшăнса тăнă

Нимĕр туни çинчен

(„Савни район пуххинче“)

Апат çимĕç пĕçерме
Нумай кишĕр пухрăмăр,
Пĕçерсе чăрманиччен
Çĕртсех нимĕр турăмăр.

Шăлтăр-шăлтăр урапи

(„Шăлтăр-шăлтăр урапа“ кĕввипе.)

Шăлтăр-шăлтăр урапа, урапа,
Ăçта кайан урапа, урапа?
—Тыр кĕлечĕ хухтарма, хухтарма,
Çутти туса йухтарма, йухтарма...
Ула ĕне пăрушне, пăрушне
Ырашулăм пырĕçке, пырĕçке...
Утă-сĕлĕ йамасан та, йамасан та,
Кĕсйе тĕпĕ ырăçке, ырăçке.

Çуттипе, çуттипе...

(„Вăрман урлă“ кĕввипе)

Хир-хир урлă каçрăмăр, каçрăмăр,
Кăвак чечек çуттипе, çуттипе,
Ĕçе хăшчух тухатпăр, тухатпăр
Кăнтăр хĕвел çуттипе, çуттипе.

Çырма хĕрне ансассăн

Çырма хĕрне ансассăн
Кули ура йĕпенмест,
„Ырççынсемпе“ тӳр пулсассăн
Кули пыру йĕпенмест.

Вĕçлев йурă.

(„Çырма хĕрне“ кĕввипе)

Çирĕн йал витĕр, пирĕн йал витĕр
Йăмра витĕр хĕр курăнаť,
Ĕçсем пăсăк пулсассăн та
Хăť пытар та курăнаť.
Çăка çулçи çаврака та
Мĕн каласа çырнă-ши?
Ман ĕç тăрăх кодексра та
„Миçе çуллăх“ çырнă-ши?

* * *

Çак йурăсене кăçалхи çул кам та кам чи ăстарах йурласа ĕçлеме пултарнине пĕлтерессе шансах тăратпăр.

Ку ăмăрту Чăваш Çĕрĕç халах комиссариачĕпе писатĕлсен йурă конкурсĕсем ахалех çĕтсе кайнă пек çĕтсе çухалса кайасран ан хăрăр. Ку ăмăрту—çирĕп алăра, вăл „Капкăнăн“ кулленхи ĕçĕ, вăл массă самокритикипе вĕресе пиçсе пыраť.

Н. Вăçанкка.

Тирпейсĕр перекет

Малтанах тӳррипе калас пулаҫ, Иван Кирилч ҫынпа питех хутшӑнмасҫ. Пĕр сӑмахпа каласан, етем пурӑнман хирте пурӑннӑ пекех пурӑнаҫ. Хӑйĕн кил таврашĕнче мĕн те пулса ҫитмесен те ҫын патне кивҫене каймасҫ, ҫынна та вӑхӑтлӑха кивҫен нимĕн те памасҫ.

Пĕре ҫавнашкал, ҫил пулманнипе арман авӑртаймасӑр ҫӑнӑх ҫук пирки, ерне ытла ҫӑкӑрсӑр ҫара паранкӑпа пурӑнчĕ, ҫын патне ҫӑкӑршӑн кивҫене каймарĕ.

Ҫав тери хытӑ етем вара вӑл. Сине пĕр-пĕр тумтир туса тӑхӑнчĕ тĕк-ки, ҫав тумтир ҫĕтĕлсе кайса тӑнӑхма йурӑхсӑр пуличчен урӑх тумтир туса тӑхӑнмасҫ.

Ĕҫлес тĕлĕшĕнчен ытти ҫынсем пекех ĕҫлет ĕнтĕ вӑл. Йаланах Йетĕрнери ҫпирт савӑтне кайса ĕҫлекелесе укҫа-тенкĕ тупкалаҫ. Анчах, укҫа-тенкĕ тупкалаҫ пулсан та, хӑйĕн хыттипе районра тухса тӑракан йӳнĕ хаҫата та пĕр 3 уйӑха та пулин ҫырӑнса илсе вуламасҫ. Ҫав тери хытӑ вара вӑл укҫа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен. Кашни пĕр пус укҫана пӳрне хушшине хĕстерсе ҫирĕппĕн тытаҫ. Патшалӑха тӳлес пулсан вӑл нихӑҫан та кутӑнлашса тӑмасӑр тӳлемест, йаланах ун патне 5—6 хут ҫитмеле. Укҫи пулсассӑн та пĕр майах ун ҫӑварĕнчен „ҫук“ сӑмах тухаҫ. Тӳленĕ чухне те вара кашни укҫине йенчен йене 7—8 хут ҫавӑркаласа пӑхсан тин ҫынна тыттараҫ. Укҫине хĕрхенсех килте какай ҫук пулсан, пĕр кĕренке те сутӑн илсе ҫимест.

Пĕре вӑл Иетĕрнери ҫу савӑтĕнче апӑр-тапӑр ĕҫсене ĕҫлекелесе трукӑн 250 тенкĕ илсе таврӑнчĕ.

— Старик, йуратнӑ упӑшкам, — терĕ Иван Кирилча хӑйĕн арӑмĕ,—пирĕн укҫа-тенкĕ ҫук мар, пур. Малтанхи 200 тенкĕ пур, халь тата 250 тенкĕ илсе килтĕн, тавай пĕрер ҫĕнĕрен хура кĕрĕксем ҫĕлетсе тӑхӑнар: тепĕр ҫурҫулӑха „Капкӑн“ ҫырӑнса илер, хакĕ хаклӑ мар, ҫулталӑка 3 тенкĕ ҫеҫ. Унта кулӑшла калавсем питĕ нумай, кулар пĕре ватлӑхра, ĕлĕк макӑрни те ҫитĕ. Йулашки укҫине перекет кассине кайса хурар, унта укҫа хушӑнса тӑраҫ, патшалӑх та вӑхӑтлӑха усӑ кураҫ пирĕн укҫапа,—терĕ сассине хӑпартарах. Иван Кирилч арӑмĕн сӑмаххипе килĕшмерĕ. Ҫамки тирне пĕркелентерчĕ те, укҫисене пӑчӑртаса тытса:

— Ҫири кĕрĕксене виҫĕм ҫул анчах ҫĕлетсе-ха; саплӑкласан тепĕр виҫĕ ҫул пурӑнма пулаҫ, ҫĕтĕлсен ҫĕлетĕпĕр, ҫĕтĕлмесен—пурӑнатпӑр-ха. „Капкӑн“ ҫырӑнса илсе кулса-ахӑрса ларма епĕр йаш ҫынсем мар, ват ҫынсене кулни килĕшмест. Кулнӑ чухне катӑк шӑлсем те курӑнĕҫ пирĕн,—тесе хучĕ.

— Ну апла пулсан мĕн пур укҫине пĕтĕмпех перекет-кассине кайса хурас пулаҫ, укҫана килте усрама хӑрушӑ,—терĕ арӑмĕ татах.

— Перекет-кассине? Пирĕн аттесем те ĕлĕкхи вӑхӑтра виҫшер тенкĕ укҫине нихӑҫан та банка кайса хуман, йаланах тур хыҫĕнче, минтер айĕнче, йе урӑх ҫĕрте пытарса усраччĕҫ. Епĕ те атте йӑлинчен айаккала пӑрӑнмастӑп. Калӑр есĕр хĕрарӑмсем, перекет кассине мар, хуҫкас сине хумала та тейĕр! Хĕрарӑм сӑмаххине итлесе пырсан, алла пĕр пус укҫа та тытаймӑн,—терĕ Иван Кирилч хытӑрах саспа.

Хĕрхенчĕ Иван Кирилч 450 тенкӗ укҫине. Нимĕн те тавасшӑн пулмарĕ укҫипе. Хĕрхенчĕ те мĕн пур укҫине шур тутӑр татăкĕпе чӑмӑртаса сыхрĕ те, таҫта „тĕплĕ“ вырӑна пытарса хума тулала тухрĕ.

* * *

Инкек вăл нихăҫан та хăй хăҫан, хăш вăхăтра, хăш вырăнта, кам патне ҫитсе ҫапăнассине етемле малтан ҫыру йарса пĕлтермест. Сасартăк кам патне те пулса, урнă кашкăр пек хайаррăн урса пырса ҫапăнаҫ те, етемме пысăк сийен туса кайаҫ. Хăшпĕр чухне инкексем пĕчченшерĕн те мар, темиҫе инкек пĕрле пухăнса хайарăн пĕр ҫынна ҫитсе ҫапăнаççĕ те, чылай пысăк сийен туса кайаççĕ.

Иван Кирилча та ҫавăн пекех, малтан ҫыру йарса пĕлтермесĕрех, сасартăк пысăк инкек ҫитсе ҫапрĕ те, ĕни вилсе выртрĕ. Кĕтменчĕ ăна Иван Кирилчăпа арăмĕ те. Кĕтмен ҫĕртен ҫавăн пек пулса тăчĕ.

— Мĕн тăвас? Ĕнесĕр мĕнле пурăнас?— йĕрсе йачĕҫ Иван Кирилчăпа арăмĕ те.

— Укҫа пур, ĕне туйанас пулаҫ.

— Туйанас...

Ĕне вилсен тепĕр ернерен Иван Кирилч хăйĕн пускилинчех Љавук ĕнине 400 тенкĕпе килĕштерчĕ. Ĕне килештерчĕ те укҫа патне арпа ӳплине укҫа илме чупрĕ. Укҫа чĕркенĕ тутăр татăкне тупрĕ. Туртса кăларсанах тутăр чăмăрки варринчен умлăн хыҫлăн, пĕрин хыҫҫăн тепри икĕ пĕчĕк шăши ҫури тухса ӳкрĕҫ. Шăши ҫурисем тутăр ăшĕнчен тухса ӳксенех Иван Кирилчăн ҫӳҫ-пуҫ вирелe тăрса кайрĕ. Тутăр татăкне йăпăр-йăпăр уҫса пăхрĕ те:

— Ап-пай-пай!—Кунта татах тепĕр инкек ҫитсе ҫапнă. Иван Кирилчăн 450 тенкĕлĕх йăва ҫавăрса ултă ҫурă ҫавăрланă. Йĕрсе йачĕ Иван Кирилч.

— Каларăм вĕт сана укҫана перекет-кассине хумала тесе, итлемерĕн!—тесе йĕрет арăмĕ те. Ĕне те ҫук, пĕр пус укҫа та ҫук... Ҫапла ҫав, чавса ҫывăхра та,—ҫыртса илме ҫук... **М. Дангер.**

Йапăх фермăра

Мйаҫников ӳкерчĕкĕ.

Хуйхăлăн ҫырса хăварни

Вал. ТРАХТЕНБЕРГ

(3 пайлă водевиль)

ПЙЕСĂРИ ÇЫНСЕМ:

Моховик Йакур Петрович 65 çулта.
Алтати—унăн арăмĕ 60 ç.
Петр—вĕсен внукĕ.
Уçтине Пантелеевнă—Москвичкă тесе чĕнеççĕ, çирĕп, савăнăçлă карчăк.
Љубă—трактористкă.
Елекçей—комсомолĕс.
Ухруç—комсомолкă.
Хĕрсем, каччăсем.

ПĔРĔМĔШ ПАЙĔ

Улăмпа витнĕ кивĕ пӳрт. Пӳрт умĕнче темиçе улмуççи, тата тем тĕрлĕ тăсăлса кайнă хĕвелçавăрнăшсем. Чалăшса кайнă лăчăр-лачăр хапха. Инçетре, пысăк шыв хĕрĕнчи пĕчĕк сăрт çинче колхоз çурчĕсем курăнаççĕ.

Петĕр. Есĕ ан çилен, йепле тăвас тенĕ çапла пулаҫ,—епĕ Моховике вăхăт çитмесĕр тивес мар тетĕп çеç.

Љубă (*Кулса*). Пурĕ-пĕрех пĕлет.

Петĕр. Ана йерипен хатĕрлĕпĕр. Ахалĕн вăл асса кайĕ. Хытах вăрçма пултараҫ. Епĕ ăна сахалтарах калăп.

Љубă. Есĕ унпала пĕчĕк ачапа аппаланнă пекех аппаланатăн.

Петĕр. Вăл пĕчĕк ача йевĕрлех ĕнтĕ, унăн кирлĕ пек ăнланса илесси çук. Çĕр çумнех сыпçăнса ларнă... Пĕтĕмпех ăçтан ăнланса илме пултараҫ-ха вăл?

Љубă. Çак, ман шухăшпа, пĕрре те тĕрĕс мар. Акă Уçтиненех илсе пăхăр. Вăл ватă, çапах вăл пирĕншĕн, çамрăксемшĕн те пример пулса тăма пултараҫ . . .

Петĕр. Ăна хамăр майлă çавăрса хума пулаҫ-и вара? Унăн пуç мимийĕ хытса ларнă вĕт, чаваласа çемçетеймĕн. Старике куççулпе йĕрме патне çитичченех лучăркаса илес пулаҫ.

Љубă. Апла манăн уншăн шыва сикмеле-и мĕн? (*Кулаҫ*).

Петĕр. Путмастпăр вĕт, ишсе тухăпăр тухăпăрах.

Љубă. Ултавпа епцин?

Петĕр. Йепле ултав пулаҫ-ха ку, пурне те кирлишĕн пулсан. Есĕ, Љубă, ăнлан—мĕнле пăрахăп-ха епĕ старике? Асатте мансăрăн вилет... Асанне ревматисăм чирĕпе чирлĕ, ну, епĕ колхоза кайсан асаттен ĕçлекен çын пулмаҫ—пĕччен вăл ĕçлесе çитерес çук. Вара . . .

Љубă. Вараҫ.. Каласа пĕтер.

Петĕр. Вара... çавăнпа та епĕ сыхланарах каласшăн . ..

Љубă. Илтнĕ, илтнĕ .

Петĕр. Есĕ ан çилен... Епĕ ăна пайанах ăнлантарса хатĕрлентерсе илетĕп.

Љубă. Ну, йураҫ. Апла пулсан каласса татăлнă (*Алă параҫ*).

Петĕр. (*Аллине çĕклесе*). Тырă пухса кĕнĕ хыççăнах ним кайа хăвармасăр.

Љубă. (*Кулса*). Апла тырă пухса кĕрессине срукчен тултарасчĕ, ахалĕн чăтма çук.

Петĕр. Ав йепле есĕ... (*Ыталарĕ*).

Љубă. Йепле? (*Петĕр чуптăваҫ*).

(*Хапхаран Йакур Петрович Моховик кĕчĕ. Чуптунине курса, кайăксене хăваланă пек аллисене çапрĕ*).

Љубă. Акă, асатте... Сывă-и?

Моховик. Камшăн асатте—саншăн епĕ Йегор Петровичă... Ай-йай-ай! (*Пӳрнипе йунаҫ*). Ай хĕрача, арçын ачапа чуп тума сана намăс та мар-и?

Љубă. Çук епĕ мар ăна, вăл мана. (*Кулаҫ*). Есĕ чăрмантарман пулсан... епĕ те ăна чуп тунă пулăтăм... Санăн внуку аванскер.

Моховик. Есĕ колхоз качаки меклетсе ан тăр. Кăнтăр кунĕнче йĕкĕтпе... ыталанса тăма мĕнле намăс мар?

Петĕр. Нимĕнле намăс та çук, мĕншĕн тесен . . .

Моховик. (*Сасне хăпартса*). Петкă, кам сана ӳстернĕ, кам сана тăрантарса усрарĕ? Епĕ .. Çавăнпа та есĕ кайран каласăн.

Љубă. Ахалех çиленетĕн, Йегор Петрович, чăнахах епĕ çавтерийех начар хĕр мар-çке .

Моховик. Пире сан пеккисем кирлĕ мар Епĕр хамăра-хамăр . . Уирăм хуçалăхсем ĕпĕр, есĕр колхозниксем—ăнлану пĕр мар пирĕн.

Петĕр. Калаçса татăлайатни вара унпа? (*Аллипе сулчĕ*).

Љубă. (*Моховике*). Епир санпа тавлашăпăр ха, сӳтсе—йавăпăр, асатте.

Моховик. Пирĕн нимĕн сӳтсе-йавасси те çук. Çатăлтататăн есĕ, ахалех, çатăл-çатăл... Елĕк хĕрсем кун каçаччен виçĕ сăмах калана та хĕрелнĕ. Манăн арăм хаҫ те хĕрелме пăрахман-ха.

Љубă. Сыннисем урăх йышшисем хаҫ, Петрович! (*Хастарлă савăнăçлă йурă илтĕнет*).

Моховик (*çилĕлĕн*). Акă каллех темле хĕр йурлаҫ . . . йанраҫ .. Йурриссм темĕскерлескерсем. Пăрçа сирпĕтнĕ пек. (*Мăкăртатса*). Йурриссм сирĕн ытла та савăнăçлă пулса кайрĕç. Мĕншĕн савăнмала-ши? Хăйсен килĕ çурчĕ те çук темелех.. Мĕн пурнех пĕрлештернĕ... Мана ку пĕр те кăмăла каймаҫ.

Љубă. Ай, асатте, суйатăн! Есĕ хăвăн çилӳна шăнăçтараймасăр вăрçатăн, есĕр епĕр савăннăшăн, епĕр ывăнма пĕлменнишĕн, пирĕн йурăсем савăнăçлишĕн çиленетĕн . .

Моховик. Чи малтанах хресчен йурри чунтан пулмала, чĕре патнех çитсе çапăнмала, ату на акă итлĕр . . .

(*Йурă çывăхарах илтĕнет*).

Петĕр. Асатте, епĕр сана пурăнма чăрмантарман, пире те ан чăрмантар.

Моховик. Малтан мана пытарăр, вара хăвăр ăсусемпе пурăнăр, халĕ епĕ чĕрĕ чух чаратăп. Колхоз мана пытарас çук—аллисем кĕске.

Љубă. Хăвăн пахчунтах чаваланас тетĕн-им?

Моховик. Чаваланатăп. (*Йурă çывăхрах илтĕнет*). Ну, ну йепле ку хĕр мана хăйĕн йурринпе тарăхтараҫ. Мĕн пур пытĕпĕне çухăраҫ, менелик чухнехи пек. Кунашкал хĕрарăм çаптарасчĕ . . . Ытла та савăнăçлă.

(*Йурă йурласа Уçтине кĕрет*).

Петĕр. Акă вăл йурлакан хĕр килсе тăчĕ.

Љубă. Москвичкăна салам! (*Љубăпа Петĕр кулаççĕ*).

Моховик. Ну—ну! Санран епĕ Уçтинă Пантелейĕвнă кĕтмен чĕ... Мĕнрен есĕ кайăк пек йурлама пуçларăн?

Уçтине. Аван мана, çавăнпа йурлатăп та, есĕ акă мĕн тăма на пек куç харшисене çавăрса пăхатăн?

Моховик. Есĕ Мускавра пулнăранпа ăсна çухата пуçлара

Петĕр. (*Љубăна*). Тавлашчăрах-ха вĕсем, ку асаттешĕн сăлă.

Љубă. Тĕрĕсех, Петруç! (*Моховике*). Куратни йепле хĕрсем улаççĕ. Санпа пĕр çултисем.

Моховик. Ну, сирĕнпе. Халăх ирсĕрлене пуçларĕ.

Уçтине. Есĕ ху та тăварланă кăмпа. Мăк ăшне кĕрсе ларнă, хăйне пур кăмпасенчен те кăмпа тесе шутлаç.

Моховик. Мĕн? Мĕн? Ку сăмахсемшĕн . . .

Петĕр. Тавлашма кĕрсе карĕç ĕнтĕ кусем. (*Љубăпа кайаç. Пĕр вăхăт Моховикпе Уçтине чĕнмеççĕ*).

Моховик. Намăс та мар-и сана, Москвичкă?

Уçтине. Мĕн çинчен çак есĕ?

Моховик. Йурăсем йурлатăн, ташлатăн. Пăсрĕ сана Мускав ĕлĕмпех. Вăйпа туртсан та епĕ Мускава кайма шухăш тытас çук.

Уçтине. Никам та сана вăйпа туртмĕ.

Моховик. Хĕрарăмĕ есĕ ытти хĕрарăмсем пек чухне аванĕ, пур йĕнчен те йĕркелĕчĕ.

Уçтине. Кăмăла каймасăр-и мĕн?

Моховик. Мĕн аванни пур? Йăваш хĕрарăмчĕ, халĕ йанраса çӳретĕн.

Уçтине. Усăсăр йанраса çӳреместĕп.

Моховик. Сана пĕлме хĕн. Палламала мар сана. Çӳпессе те урăхла çӳретĕн, сассу та урăх, утни те урăх... Çук, есĕ е, анчах ху пек мар. Пĕтĕмĕшпех улшăнса кайнă.

Уçтине. Тĕрĕс. Урăх епĕ. Сассăм та урăх, çӳрессе те пĕкĕрелсе çӳреместĕп, никамран та хăрамастăп, тата вăй та пур.

Моховик. Есĕ мана сăмахсемпе ан хăрат. Есĕ маншăн, сăмахран каласан, çывăх йулташ пулнă, халĕ пирĕн сукмаксем йăрăм. Епĕ сирĕн çине хытă çиленнĕ.

Уçтине. Есĕ ахалтенех ан çилен... Акă есĕ пăх-ха пирĕн хĕрлĕ кăшмана: йепле ӳснĕ. (*Кăтартать*). Есĕ пахча-çимĕç тăвассипе малта тăратăн пулсан та, ĕмĕрĕнтен те çавнашкал кăшман пулман санăн.

Моховик. (*Кăшмана пăхса*). Ну—ну—пурте çавнашкали çăнахах?

Уçтине. Пурте пекех, тата авантарахисем те пур.

Моховик (*ăмсанса*). Ну,—ну! Патша кăшманĕ . . .

Уçтине. Патшан мар, колхозăн кăшманĕ.

Моховик. Колхозăн... Тăрасчĕ чĕнмесĕр. Ватă пуçупа колхоза кайрăн.

Уçтине. Кайрăм та. Епĕ питех те кăмăллă. Хама-хам çамрăкланнă пек туйăнаç.

Моховик (*çиленсе*). Тен кăчча кайас тетĕн пулĕ?

Уçтине. Есĕ мана çыртаймăн.. Пирĕн кишĕре курни? (*Кишĕр кăларать*). Пăхса тăранаймăн. Картинă пек. Пахчасем, çатсем пирĕн ак йепле. Санăн интересленесчĕ хуç, епир мĕнле çĕленине пырса курасчĕ. Чăнах пыр-ха—хăна пулăн.

Моховик (*кишĕре аллипе çавăркалать*). Тен вăл йӳçĕ пулĕ, пăхма çеç илемлĕ пулĕ... Ултав . . .

Уçтине. Есĕ активсе пăх, шăлусем вичĕкĕн халĕ.

Моховик. Пултаратăп. (*Кишĕре çыртса кăмăлтан çийет*).

Уçтине Йепле?

Моховик. Сахăр пек.. Ну—ну!

Уçтине. Сăмах тупса калаймăн. Санăн çакнашкал пахча-çимĕçĕ çук та.

Моховик. Йепле есĕр асамçăланатăр, тĕлĕнмеле тăватăр?

Уçтине. Асамçăланмастăпăр, пĕлсе ĕçлетпĕр. Пахча-çимĕç мĕн йуратнине ăнланатпăр. Есĕ хăвăн вăйна ахалех сана йартăн.

Моховик. Епир уйрăм хуçалăхсем, хамăра хамăр... Мана колхоз пытарас çук—аллисеем кĕске. Мĕн есĕ мухтанатăн? Пурĕ-пĕрех вăл пахча-çимĕççене хăвăр сийеймастĕр—хулана илсе кайаççĕ, ун вырăнне сире йалав парĕç... (*Кулса*) Хоругв . . .

Уçтине. Хулана та паратпăр, хамăн та çийетпĕр. Есĕ хăвăн кырăмна та тăраничен чыслаймастăн, ыттине те нимĕн те çук.

Моховик Йепле пулнă çапла вилетĕп. Колхоз мана пытарас çук—аллисем кĕске.

Уçтине. Тĕлленĕ пĕрре, чакак пек, пĕр йурра. Сана илнĕ пулĕччĕç: есĕ çынни ĕçчен. Санăн çулу мĕлйун пулсан та, есĕ пастарлă пахчаçă.

Моховик. Есĕ ман çула ан тив. Утмăл пилĕк çул нумай-ишĕ вăл. Манăн атте тăкăрăвунă çула çитиччен, асатте çĕр те никĕ çула çитиччен суха пуçĕ хыççăн утнă.

Уçтине. Çавăнпа епĕ калатăп та—есĕ, пирĕн маттурскер! Мĕншĕн есĕ колхоза кураймастăн-ха? Кулак пулсан кулакчĕ, хăй мĕн пур ĕмĕрне асапла иртернĕ, вăйран ытлашши ĕçленĕ, апла та аран-аран вăтам хресчен пулнă.. Пĕр асап çеç.

Моховик. Хресченĕн асапсăр йепле пурăнас пулаç-ха? Хресченĕн телейĕ çавăн пек ĕнтĕ—тӳсме пĕлес . . .

Уçтине. Кам калаç сана?

Моховик. Хамах пĕлетĕп.

Уçтине. Нимен те пĕлместĕн есĕ. Тен сана кăна пĕр-пĕр кулак каларĕ пулĕ?

Моховик. Кам каланипе манăн ĕç. Хам мĕн шухăшлас тени не епĕ хам та шухăшлама пултаратăп. Сирĕн колхоз çинчен манăн итлессĕм те килмест, хытах кӳрентеретĕр.

Уçтине. Кӳреннине вăрăма тăсатăн. Хăвах пĕлетĕн йăнăш турĕç ун чухне.

Моховик. Йăнăш? Вăл йăнăша епĕ ĕмĕрне те манас çук... Вăйпа кӳртес тесе ĕнене илсе кайрăр .

Уçтине. Уншăн кама кирлине лекрĕ вĕт. Ĕнӳне сана калла тавăрса пачĕç.

Моховик. Сирĕншĕн йăнăш, манăн тӳсмеле мар пулчĕ Йăнăш пулман пулсан тен, епĕ .

Уçтине. Миçе çул иртрĕ ĕнтĕ есĕ йалан мăкăртатан?

Моховик. Ĕмĕр иртичченех мăкăртататăп, мĕншĕн тесен, .

Уçтине Мĕншĕн тесен есĕ ащак пек кутăн, ак мĕншĕн.

(*Иккĕш те çиленсе икĕ йенеле çаврăнса тăчĕç*).

Уçтине (*ачашшăн*). Ан çилен, кирлĕ мар... Епĕ сана, Йакур, ачаранпах астăватăп халĕ акă пăхатăп та: сухалу шурă, куçусем вара—çав Иакурăнах, тĕлĕнмеле... Епĕр иксĕмĕр пит туслă вĕт. Хĕрхенетĕп епĕ сана, питĕ шеллетĕп, калама та пĕлместĕп. Сана колхоза кӳртнипе мана нимĕнле усă та çук вĕт. Йакур, епĕ есĕ çĕнĕ пурнăçа ăнласа илсе, ватăлмалăх кунăнта аван пурнăçпа пурăнтăр тесе тăрăшатăп.

Моховик. Йепле ӳкĕтлекен тупаннă. Мĕн курман сирĕн патăрта епĕ?

Уçтине. Нимĕн те курман. Анчах тăрăшса ĕçлес пулаç, пурлăха сыхлас пулаç, вара пурăнма пултаратпăр, Йакурăм...

Моховик (*çиленсе*). Есĕ мана ан тив. Епĕр хамăра хамăр. Манăн мĕн пур—пурте манăн, сирĕн хăвăрăн нимĕн те çук, пурте колхозăн.

Уçтине. Колхоз манăн.

Моховик. Ав суйеçтеретĕн... Санăн мар. Унта сирĕн Грушĕвсем те пур.

Уçтине. Колхоз унăн та... манăн та... Пирĕн пурин те... пĕрле.

Моховик. Хăвăрăн нимĕн те çук... Епĕр уйрăм хуçалăхсем хамăра-хамăр, пирĕн хуçалăх хамăрăн.

Уçтине. Хуçалăх мар, хуйхă çеç. Пирĕн пĕр-пĕрин умĕнче мĕн мухтанмали пур. Ача чухне кăмпана пĕрле чупаттăмăр. Ĕнесем кĕтеттĕмĕр... Çакна епĕ сана чунтан калатăп. Йакур, пăрах кӳренме, авантарах пурăнма тăрăш. Есĕ çĕр çула çитичченпурăнма шут тытрăн вĕт.

Моховик. Пурăнăп та... Йурийех пурăнăп, колхоз мана пытарас çук—аллисем кĕске.

Уçтине. Пурнăçра интерес пит нумай. Ĕлĕк епĕ интерессĕр пурăннă, курăк пек, халĕ... Ех, Йакур, йуратнă сыннăм, есĕ пирĕнпе марришĕн, епĕ çавтерийех шеллетĕп (*пуçĕнчен ачашлать*). Есĕ шухăшла.. (*Шӳт туса сухалĕнчен туртать*).

Алтати тухать.

Моховик. (*Арăмне курса ӳсĕрет*). Çапла, çавнашкал ĕçсем!

Алтати (*сăнаса*). Мĕнле ĕçсем апла?

Моховик. Акă кунта Уçтинепе...

Алтати (*кĕвĕçсе*). Куратăп Уçтинепе...

Уçтине. (*Мăшкăллана пек*). Епир санпа йепле те пулсан чĕререн калаçăпăр-ха... Сывă пулăр. (*Кайать*).

Алтати. Ав Мускав хĕрарăмĕ, йĕке хӳре пек килсе хӳрипе выльатса çавăрса кайрĕ... (*Витлесе*). „Сывă пулăр“... Есĕ те аванскер, калама та çук ..

Моховик. Мĕн начар-им? Тепĕр çамрăка парăнмастăп. Ну-ну.

Алтати. Куратăп, витĕрех куратăп.

Моховик. Мĕн куратăн-ха? Ех, чăх-куç!..

Алтати. Москвичкă патне çыпçăнасшăн!..

Моховик. Шухăшласа кăларăн.. Ех, тăм писмен! Ну-ну пирĕн унпа урăх ĕç...

Алтати. Пĕлетĕп епĕ урăх ĕçсене... Паллах-ха вăл, ĕнтĕ пурнăçĕ те Москвичкăсемшĕн çеç. Пăхатăп та ун çине—шыçăнса кайнă, чăп-чăмăр, савăнăçлă, тата пурăнасса та аванах пурăнаç.

Моховик (*сиввĕн*). Пурăнтăр унта. Унта пирĕн ĕç çук.

Алтати. Пирĕн ĕç çук? Москвичкă ĕлĕк кĕчех ыйткалама кайман, халĕ вăл пирĕнтен те тутăрах пурăнаç. Епир санпала...

Моховик (*пӳлсе*). Тен санăн та халăх пухăвĕпе пурăнас килет пулĕ?

Алтати (*хăйусăр*). Есĕ вĕсем йепле пурăннипе епир йепле пурăннине пăх. Вĕсем темиçе хут авантарах пурăнаççĕ.

Моховик. Ытла хытă куракан пултăн. Пур-пĕрех сана колхоза илмеççĕ, мĕншĕн тесен санăн ревматизăм.

Алтати. Тен епĕ сана та кирлĕ мар пултăм пулĕ? Тен сана Мускаврисем кирлĕ пулчĕç пулĕ?

Моховик. Ну санпала! (*Пăртеме кĕрсе кайрĕ*)

Алтати (*скамйа сине ларчĕ*). Ватăлмалăх кунта çавнашкал уйрăм ăрасна ĕçсем... (*Йывăррăн сывласа илет*).

Ухруçпе Елекçей кĕреççĕ.

Ухруç. Пăрах, Аљошă!.. Епĕ ăна ăнланаймастăп.

Елекçей. Мĕн унта ăнланмала марри пур? Йурататăп—пĕр сăмах.

Ухруç. (*Аллисемпе суласа*). Мĕн есĕ. Мĕн есĕ. Йурату ĕçлеме чăрмантарать çеç.

Елекçей. Йурату-и? Хĕрĕ есĕ питĕ маттур. Активиска, мухтав хăмла çинчен хуралмастăн, анчах санăн пурнăçра савăнăç çук... Çав питĕ шел...

Ухруç (*хăйĕвĕăр*). Йепле апла пурнăçри савăнăç?

Елекçей. Ăнланаймастăн-и вара? Хăна-ху тăварласа хунă, кулма пăрахнă.

Ухруç. Ĕç мăй таранах чухне, кулма вăхăт çук..

Елекçей. Ку акă тĕрĕс мар... Епĕ кулăпа тата йурăпа ĕçе ытларах ăнтарма пултаратăп. Мĕншĕн тесен епĕ çынни çавнашкалскер... Савăнма, йуратма епĕ пĕлетĕп.. Акă есĕ..

Ухруç. Йуратма вăхăт çук... Унта, кунта ĕç питĕ нумай, мăй таранах... Аçтан ĕлкĕрен вара...

Елекçей. Мĕншĕн тесен есĕ ахалех чупса çӳретĕн, йĕркелĕх çук санăн. Ех, есĕ!. Хăна-ху та хурлăх кăтартатăн, мана та...

Ухруç (*тĕлĕнсе*). Мĕнпе апла епĕ сана хурлăх кăтартатăп?

Елекçей. Ăнланусăрскер... (*купăсне калать*). Аăа пайан уçăлса çӳреме... Чечексем татăпăр..

Ухруç. Ну мĕнле-ха ĕсĕ ăнланаймастăн. Уçăлса çӳреме ман вăхăт çук.

Елекçей (*Купăс каласа*). Ташлăпăр... Чăнах кайас килмест-и? Ну, кулса кăтарт ĕнтĕ пĕрре те пулсан.

Ухруç. Мана кулни килĕшмест. Вăхăт çук.

Елекçей. Питех те „килĕшмест".

Ухруç. Тĕлĕнмеле çын есĕ, Аљошă! Чăнах мĕнле хе есĕ ăнланаймастăн, есĕ йалан купăспа, акă епĕ тимлесех ĕçлетĕп.

Елекçей. Ухруç, Ухруç тетĕп! Есĕ ан шухăшла... Епĕ те тимлесех ĕçлетĕп. Анчах ăнлан—йурату...

Ухруç. Ĕç мăй таран чухне, йуратупа аппаланма вăхăт çук.

Елекçей. Шуйттан хĕрĕ Епĕ колхозра йулашки кахал-и мĕн? Епĕ йурату çинчен калатăп пулсан чĕререн калатăп. Çĕр проценчĕпех йурататăп. (*Купăс калать*).

Алтати. Ан ĕнен ăна, Ухруç! Арçынсем вĕсем пурте ултавçăсем, автансем... Авă манăн та ашкăнса кайнă. Вăл мана питĕ кӳрентерет. Мĕн каласси пур, старикĕ вăл аванскер, паттăр, сухалĕ пурçăн пек... Çавăнпа ун çине хĕрарăмсем пăхаççĕ...

Елекçей. Ха!.. Илтетĕн-и, Ухруç?.. Авă вăл йурату мĕн тăваť. Хăйĕн старикне кĕвĕçет...

Ухруç. Кай ун пек йапаласем çинчен калаçма манăн вăхăт çук.

Елекçей. Ухруç, Ухруç тетĕп!.. Ăнласа ил-ха есĕ... (*Ухруç çине йуратса пăхать*). Çапах та питĕ чипер.. Пăхатăп та епĕ сан çине.чуп тăвас килет.

Ухруç (*çиленнĕ пек пулчĕ*). Ой! Ой!

Алтати (*Ухруçе*). Есĕ акă вĕреннĕскер, пулăш мана.

Ухруç. Мĕнле ĕç? Есĕ кĕскерех—ман вăхăт çук.

Алтати. Манăн старик Укçине Москвичкă хыççăн чупать, леш вара вĕлле хурчĕ пыл çине ларнă пекех... Килчĕ те, хай, пуçĕ çине йăвăç улми тĕрĕлĕ тутăр çыхнă, йурлать, ман старике астарать.

Елекçей (*кулать*). Мĕн шухăшласа кăларăн есĕ, асанне!

Алтати. Ман старикки картинкă пекех ĕнтĕ,,. Хай вăйлă. Унпа çивĕч пулас пулать. Епĕ те айах пулмăп. Манăн арчара кашимировăй кĕпе пур, тĕрленĕскер, аркă вĕçлĕ. Праçникре тăхăнатăпах.., Çав кĕпене тăхăнсан старик мана йуратса пăрахать. Вара епĕ те ун çинчен куçсене илместĕп. (*Елекçейе*). Сана кулăшла-и? Манăн тен чĕре тапма чарăнать пулĕ... Тăванăм, пулăш!

Ухруç. Мĕн тăвас?

Алтати. Хĕрхен мана, тен есĕ темле чĕлхе пĕлетĕн пулĕ, йе мĕнле те пулин йумăç пăхмалли йапала пулĕ, калăпăр йепле те пулин тымарсем..

Ухруç. Йепле тымарсем?

Алтати. Чĕре тымарĕсем ĕнтĕ...

Ухруç. Нимĕн те пĕлместĕп.

Елекçей. Авă вăл йурату. Вăй. Есĕ йуратăва хирĕç—унашкал пулма йурать-и вара?

Ухруç Пăрах. Йурату çинчен шухăшлама ман вăхăт çук..,

Елекçей. Тфу! Анланманскер.

Моховик кĕрет.

Моховик. Сывлăх ачасене. (*Ухруçе*). Хĕвелĕм, çиленсе пахатăн?

Ухруç. Манăн ĕç мăй таранах. Тата ман санпа калаçас та килмест, мĕншĕн тесен есĕ йединоличник. (*Тухса кайрĕ*).

Елекçей. Пĕтĕмпех пăсăлса кайрĕ...

Моховик. Сирĕн колхоз мĕн пур çынсене пăсса пĕтерет.

Алтати. Турра манчĕç... Йĕркелĕх çук. Ирĕрлĕх пуçланчĕ... Ваттисем те хĕрарăмсем патне чупма пуçларĕç те... Тура пĕтĕмпех сырса хурĕ...

Моховик (*кулса*). Ну, ну!.. Пуçларĕ... Карчăк!. Есĕ хăвăн турруна хăвар. Епир унпа тавлашулă...

Алтати. Антихрист! (*Кайрĕ*).

Моховик. Хайар карчăк, çапах та аванскер. Çамрăкранпах çавнашкал... çынĕ çавнашкал.., Чуста хăпарса чĕресрен тăкăнна пек... Хăйуласкер... Вут.

Елекçей. Епĕ, Моховик, – интересленетĕп— мĕншĕн есĕ турăпа хирĕçлĕ?

Моховик. Тахçанах ĕнтĕ... Чи малтанах ачасемшĕн. Кайран тырă пулманшăн... Çавăнтанпа унпа урăх калаçмастăп...

Елекçей. Апла, апла ...

Моховик. Ачасене епĕ чунтан йуратнă, вĕсем вилсе пĕтрĕç... Пĕрне хăварчĕ, ăна та çирĕм пилĕк çула çитсен илсе кайрĕ... Тата тырă пулманшăн çинчен калатăп, мĕн чухлĕ епĕ унтан ыйтрăм, ахалех пулчĕ, ну вара пĕтрĕ... Çилентĕм.

Елекçей. Тĕрĕс тунă, асатте! Мĕншĕн тесен ахаљ вăхăт иртерни çеç.., Санăн ăнлану пур, анчах есĕ питĕ кутăн—çак начар. Мĕншĕн есĕ хăвăн Петĕре колхоза йамастăн? Пулă пăр çумне çапăннă пек çапкаланатăр, усси çук.

Моховик. Халĕ хам чĕрĕ чух колхоза каймастăп, Петĕре те йамастăп, Колхоз мана пытараймĕ—аллисем кĕске. Калаçса çавăрма ан та тăрăш мана. Çатăлтататăр ытла та.

Елекçей. Суха-пуçпе аванрах тейĕн?

Моховик. Уйрăм хуçалăхсем епĕр хамăра-хамăр... Мана вĕрентме çамрăкрах-ха есĕ халĕ.

Петĕр кĕрет.

Моховик. Есĕ ăçта çухалса çӳретĕн тата?

Петĕр. Колхозра пултăм.

Моховик. Ытла час-час çӳре пуçларăн... Мĕн курман унта?

Петĕр. Сана кайса курма ăс паратăп.

Елекçей. Тĕрĕс.

Моховик. Мана ес ăс пани кирлĕ мар. Ман хулпуççисем çинче хамăн пуç пур.

Елекçей. Пĕр ăс аван, иккĕ тата аванрах.

Моховик. (*Елекçейе*). Ан çатăлтат. (*Петĕре*) Тен санăн колхоза кайас килет пулĕ (*Чейен куçне хĕсрĕ*).

Петĕр. Хуť халех.

Моховик. Шухăшлама та пăрах. Епĕ сана кăкăр ĕмекен ачана пăхса ӳстернĕ... Мансăрăн вилнĕ пулăттăн... Кам сана сĕт ăшăтса панă?—Епĕ! Кам сана пăхса ӳстернĕ?— Епĕ! Никама сана шанса паман... Карчăка та çывăха йаман... Ачашланă, сыхланă, есĕ тав та пуç вырăнне...

Петĕр. Ан çилен, асатте, сан ирĕкĕнтен тухмăп.

Елекçей. Ухмах!

Моховик. Маттур, Петĕтук, ан парăн! Мана хытă кӳрентерчĕç... Кӳрентернине аванах астăватăп... Епир хамăра хамăр.

Петĕр. Ахаљ тĕплĕрен шухăшласан...

Моховик. Шухăшлама та кирлĕ мар.

Елекçей. (*Петĕре*). Çĕрĕк тунката есĕ. Епĕ пулсан унашкал асатте çине çаврăнса та пăхман пулăттăм...

Љубă кĕрет.

Моховик (*Мăшкăлласа*). Каллех чуптума килтĕн-и?

Љубă. Асатте, йепле сана тек вăрçма йăлăхтармасť.

Елекçей. Унăн йăли çавăн пек.

Љубă. (*Петĕре*). Каларăн-и?

Петĕр. Ĕлкĕреймерĕм ха.

Моховик. Мĕн шухăшласа кăлартăр-ха?

Петĕр. Есĕ, асатте, йĕркипе итле-ха, епĕ сана ăнлантарас тетĕп...

Моховик. Йĕркипе итлес тесен йĕркипе итлĕп, йĕркесĕр итлес тесен йĕркесĕр итлĕп—ку ĕнтĕ ман ĕç.

Елекçей. Хăтлантăрах ĕнтĕ хăйне кирлĕ пек.

Моховик. Ăнлантар... Анчах часрах...

Петĕр. Ĕç çапла... (Вăрăм паузă). Мĕн вăрăма тăсас?.. Авланас тетĕп, акă мĕн пур сăмах.

Љубă. Ăнлантартăн, мĕн каласси пур...

Елекçей. Ырă сунатăп! (*Купăсне калать*).

Моховик. Ей, есĕ, мусăкçă, чарăн-ха! (*Сухалне йакатса*). Мĕнех вара, Љубă аван хĕр...

Петĕр (*Савăнса, Љубăна*). Епĕ каларăм вĕт.

Моховик. (*Васкамасăр*). Ну, ну!,. Ырлатăп. Мана килĕшет.

Петĕр. Епĕ каларăм вĕт.

Љубă. Мĕн шатăртатан? *(Кулса).* Çĕнĕ çын парнепе, асатте! Преми илтĕм—калуш!

Моховик. Чăнах-и? Калуш? Нихçан та тăхăнса курман... Пĕрре тĕлĕкре курнă: епĕ калушсемпе пыратăп пек, вĕсем хĕвелпе йăлтăртатаççĕ пек, манăн сăн курăнаť пек...

Петĕр. Епĕ савăнатăп та, асатте...

Моховик *(Пӳлсе).* Чим-ха епĕ хам йенчен килĕшетĕп...

Петĕр. Епĕ каларăм вĕт.

Елекçей марш калаť.

Моховик. Хĕр аван, маттур.. Ĕçлеме пултараť, пире килте пулăшу пулаť.

Љубă. Мĕн?

Моховик. Хăлхасăр-им? Йышăнатпăр тетĕп... Килех, кӳрентермĕпĕр.

Љубă. *(Татăклă).* Епĕ колхозран тухмастăп.

Елекçей *(Моховике).* Ав мĕн кирлĕ сана?

Петĕр. Апла нийепле те май килмест-и, асатте?

Љубă *(Моховике).* Есĕ мĕн епĕ колхоза пăрахса кайап тетĕн-им?

Моховик. Ну, ну!.. Петĕре йурататăн пулсан, пăрахатăн.

Љубă. Петĕр йуратмасť-им?

Петĕр. Епĕ, Љубă, мĕн виличченех...

Елекçей. Апла... *(Хурлăхлă марш выльаť).* Мĕн виличченех.

Љубă. Çук, асатте... хăм колхоза пăрахмастăп.

Моховик. Каларĕ. Хам... Тупрĕ...

Љубă. Çапла „хамăн". „Манăн" колхоз.

Моховик. Чарăн, тпру-у... вĕçрĕ, тпру-у! Ав мĕнле... есĕр... Ман сăмах: уйрăм хуçалăхсем епĕр, хамăра-хамăр... Колхоз мана пытараймĕ—аллисем кĕске.

Елекçей. Унăн ăшне электрицă токĕ йамала, ăнланса илтĕр.

Петĕр *(тархасласа).* Асатте!.. Есĕ кăна аваннрах ăнланса ил-ха.

Моховик. Ăнланатăп... Колхоза йамастăп... Ку пулас çук. Кӳренӳ пур манăн. Епĕ сана кăкăр ачине пăхса ӳстернĕ... Савăнпа та сан мана итлемеле.

Елекçей. Нимĕн те итлемеле мар. Ухмах есĕ, акă мĕн!

Моховик *(Љубăна).* Тен есĕ трактăра йурататăн пулĕ? Апла иккĕрен пĕрне суйла: йе Петĕр, йе трактăр!

Љубă. Манăн суйламали çук, епĕ хамăнне каланă *(Петĕре).* Манăн суйламала пулаť, Петĕр!

Елекçей. А! Вăл çĕрĕк чĕнмест, çăварне шыв сыпнă пек тăраť. *(Љубăна)* Ей, кайтăр çав шуйтан патне! Епĕ ахаль вăрçа йуратастăп пулсан та пĕрре çамкинчен шаккаса илнех пулăттăм.

Моховик. *(Елекçейе).* Есĕ музăкçă, пирĕн ĕçе ан хутшăн. Манăн сăмах—чул.

Петĕр. Есĕ, асатте, шухăшласа пăх.

Моховик. Шухăшланă... Урăх...

Елекçей. Пăнчă. *(Купăсне калама пуçлаť).*

Петĕр. Епĕ Љубăсăр пултараймастăп... Кирек те мĕн ту, сатте, епĕ...

Елекçей. Есĕ ху та, асатте, йуратнă пулĕ... Ăнланас пулаť.

Љубă. Вăл ăнланаť, унăн хăй тăвас килнĕ пек тăвас килет ĕç. Анчах вăл хăй тăвас тенĕ пек çавăраймĕ.. *(Моховике).* Манăн сăмаху чул, манăн тимĕр.

Елекçей. Чăнах та чул çине çава тупăнчĕ... *(Петĕре).* Мĕн есĕ тунката пек тăратăн?

Петĕр. Епĕ, Аљошă... *(Чейен куç хĕрĕ).* Ăнланатăн-и?

Елекçей. Нимĕн те ăнланаймастăп.

Моховик. Йамастăп, епир хамăра-хамăр...

Љубă. Иккĕрен пĕрре, Петĕр... Санран сăмах кĕтетĕп. Сана пытă йурататăп, пĕр пытармасăрах калатăп, анчах колхоза пăрахмастăп. Ну, епĕ кĕтетĕп!

Елекçей. Епĕ Петťă пек пулсан, шухăшламастăп та, ывăç тупанĕ çинчи пек паллă.

Моховик *(куљљанса).* Епĕ сана, Петруç, кăкăр ачине пăхса ӳстертĕм, йепле-ха есĕ мана хирĕç кайăн.

Петĕр. Есĕ, асатте, шухăшла-ха?

Љубă. (*Петĕре куç хĕссе*). Сывă пул, Петťа!

Петĕр. Љубă. Мĕнле-ха капла?

Елекçей. Путек есĕ! Сан çине пăхма та намăс. *(Моховике).* Есĕ тата ват супнă, намăс ăçта санăн?

Моховик *(кăшкăрса),* Чарăн, музăкçă! Тухса кай, кунта манăн сăмах çук.

Петĕр. Асатте, тавай чĕререн каласар.

Љубă. Кайа йултăн, Петĕр!.. Нумай шухăшларăн. Кайатăп... Салăн ан асăн.

Петĕр *(Нимле мар пулса).* Љубă... епĕ... халех... хăвах çĕлетĕн.

Љубă. Урăх каласмали çук...

Петĕр. Вилетĕп!

Моховик. Вилместĕн. Уншăнах вилмеççĕ.

Елекçей. Кай, Љубă! Сирĕн çулсем пĕр мар. (Купăсне ӳртса йачĕ).

Моховик. Љубă... Тен есĕ... Урăхла шутлăн?

Љубă. Епĕ кирек хăçан та, хам йепле тăвас тенĕ çапла тăватăп.

Моховик. Ну,ну! Сахал йурататăн апла пулсан.

Љубă. Мĕн чухлĕ пултаратăп.

Петĕр. Љубă, епĕ чĕререн каласас тетĕп. Кайран.

Љубă. Чим ĕлкĕрĕн. *(Куçне хĕсет).* Хĕрхентерсе пăхар.

Елекçей. Йепле чĕре патне пыракан драмă... куçса çӳрекен кино пек. *(Купăс каласа йаратъ).*

Љубă. Сывă пул!

Петĕр. Епĕ, Љубă, капла пултараймастăп... Епĕ вакка сикетĕп... Епĕ .. *(Сасартăк кулса йаратъ).*

Љубă. Ну, саппала! *(Ку та кулса йачĕ).*

Моховик. Мĕн сасартăк ахăрма пуçларăр?

Љубăпа Петĕр кулаççĕ, Елекçей купăсне выльаť.

Чаршав

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Уçланкă. Сăрт çинче, йăвăçсем витĕр хăй çутисем курăнаççĕ. Уйăхлă каç. Инçетрен хор йурлани илтĕнет. Ухруç чупса кĕрет, ун хыçĕнчен Љубă тата темиçе хĕр кĕреççĕ.

Ухруç *(аллисемпе сулса).* Çук, çук...

Хĕрсем. Ухруç, аťа ĕнтĕ ташлар...

Ухрӳç. Ан та чĕнĕр. Сиккелеме ман вăхăт çук.

Хĕрсем. *(Кулаççĕ).* Пирĕн сикес, ташлас килет. Йурамасť-и вара?

Ухруç. Тен сире пурне те йураť пулĕ, мана йурамасť. *(Йăвăрăн сывласа).* Манăн ĕç мăй таран. Ташăпа аппаланма вăхăт çук ман.

Пĕр хĕр. Акă манăн ĕçлеме те, уçăлса çӳреме те, ташлама та, чуптума та вăхăт çителĕклĕ.

Ухруç. Ӳй, йепле сана намăс мар?

Пĕр хĕр Ну, унпала, мĕн ăна ытла тилмĕрсе тăмали пур. Кайар хĕрсем... *(Ухруça).* Есĕ пыр, савăнăçлă пулаť.

Ухруç. Вăхăт çук манăн. *(Хĕрсем кайаççĕ).*

Љубă. Мĕн есĕ хăвна кичемлетсе йанă?

Ухруç. Љубушкă, йепле есĕ ăнланаймастăн... Манăн ĕçсем мăй таран, пиллĕк нагрузкă...

Љубă. Есĕ хăвăн вăхăтна йĕркелесе йама пĕлместĕн. Çавăнпа та сĕрĕм тивнĕ пек анкăминкĕленсе çӳретĕн.

Петĕр сасси. Ау! Љубă! Ау-ау! Љубушкă!

Ухруç. *(Măшкăлласа).* Каччу чĕнет... мусăкçă. Санăн акă пур çĕрте те вăхăт çитет. *(Кулаť).*

Љубă аллине сулчĕ те тухса кайрĕ.

Ухруç. *(Калле-малле утса çӳресе).* Тĕлĕнмеле, тĕлĕнмеле. *(Сăрт хĕррине ларчĕ. Ташă кĕвви, йурлани илтĕнет).* Весем ташлаççĕ. *(Итлесе).* Савăнăçлă йурлаççĕ. *(Шухăша кайрĕ, унтан йурлама пуçларĕ).*

Ой, ой. Куна епĕ йурлатăп-и çак? *(Пуçне силлерĕ).* Ой, ой, Аљошă калаť, манăн сас уçă, тет, çапах та, вăл тем те калĕ? Вăл мана кулни те килĕшмест, тет. Апла пулма пултараймасť. *(Йĕри-тавра пăхрĕ, куçкĕски кăларчĕ).* Пăхас-ха *(куçкĕски çине пăхаť).* Чăнах та аванах курăнатăп-çке. *(Кулаť).* Ой чăнах та килĕшет. *(Сиксе тăчĕ).* Чăнах та Аљощă аван ача, вăл мана питех кăмăла кайаť, анчах та ман вăхăт çук, ĕç май таранах. *(Ташă кĕвви йурлани хытăрах илтĕнет).* Ташласççĕ... Хм.. Епĕ маннă та пулĕ ĕнтĕ? Ташлас, çавăнкалас... Ой ташлас килет. Ой хама-хам чарма пултараймастăп... *(йуррине йурласа ташлаť).*

Елекçей *(сăрт çинчен).* Ухруç, есĕ мĕн тухатмăш пек çавăнкалан?

Ухруç. Ой манăн вăхăт çук. *(Тухса тарчĕ).*

Елекçей. Ухруç ăçта? Ухмаха йернĕскер. Ухруç. Ухруç. *(Ун хыçĕнчен чупрĕ).*

Алтатипе Љубă кĕреççĕ.

Алтати. Ăнланатăп сана хĕрĕм. Хам та йуратса курнă, хĕрхенетĕп епĕ питех те.

Љубă. Есĕ асатте ан куљљан, епĕр хамăр тăвас тенĕ пек тăвăпăрах. Ĕлĕкхи вăхăт мар.

Алтати. Чăнах та ĕлĕкхи мар. *(Шухăша кайса).* Калаха, мĕне кура ман старик ăна йуратса пăрахнă-ха? Сăн-сăпатран та, кĕлеткерен те манран хитрех мар—тĕлĕнсе кайатăн...

Љубă. Есĕ мĕн çинчен, асанне?

Алтати. Епĕ мĕнрен начар пултăм? Каç пулас умĕн кашнимирăвăй кĕпене тăхăнтăм, пите супĕнпе таса çурăм, ун умĕнче акаш пек çӳретĕп çав...

Љубă. Нимĕн те ăнланаймастăп...

Алтати Сывăрма выртрăм, манăн сывăрмасť, сисетĕп, темĕскер кĕтет. Епĕ куçа хĕсрĕм те сывăрнă пек пулса выртрăм... Вăл ман çине çисе йарас пек пăхаť, епĕ сывăрнине тĕрĕслет.

Љубă. Ăнланмалларах кала.

Алтати. (*хăрарах*). Унтан сухалне турарĕ те арçури пек тухса сирпĕнчĕ, епĕ ăна курса та йулаймарăм.

Љубă. Каллех нимĕн те ăнланаймарăм.

Алтати. Йепле есĕ ăнланаймастăн... Манăн старик Москвичкă патне тухса чупрĕ.

Љубă. (*ахăлтатса кулаť*). Ой, пĕтертĕн! Ой пултараймастăп! Оă! (*Аллисемпе сулаť*).

Алтати. Ăна куран хулари хĕрарăм кирлĕ. Москвичкăна суйланă. Ун умĕнче çĕлен пек йавкаланаť, нимĕн кулмали те çук.. Москвичкă акă ăçта лараť вăл манăн... мĕн калаçни тĕ пĕр ун çинчен çеç: вăл çапларах та вăл капларах. Пур малта тăракансенчен малти, хăй çын арçынĕ хыççăн чупаť. Ку мĕн, Мусквари пек-и мĕн?

Љубă. Ой, асанне, култаратăн та есĕ мана!

Алтати. Епĕ тытатăпах, епĕ ăна мана кўрентернине ахаљ хăвармастăп.

Љубă. Асанне, лăплан чунăм.

Петĕр кĕрет.

Петĕр. Љубă, епĕ сана шыратăп. (*Ыталаť*).

Алтати (*инçене пăхса*). Çавă курнаť? Çавах... (*Кайаť*).

Љубă. Тĕлĕнмеле ватăсемпе.

Петĕр. (*Љубăна ыталаса*). Йепле телей тупăнчĕ маншăн.

Љубă. (*шухăшласа*) Епĕ иккĕленетĕп, Петĕр.

Петĕр. Мĕншĕн?

Љубă. Çўретĕп те шухăшлатăп.

Петĕр. Шухăшлас килет пулĕ. Частушкăри пек:

Уж я думала, думала
А как подумала,
А как подумала—все передумала,
Лушче б не думала я никогда.

Љубă. Епĕ, Петĕр, сана кавча тухмастăп.

Петĕр. Хо, хо! Кунта та каллех асатте умĕнчи пек выљасшăн-и? Есĕ уйрăлассине чăн чăн пекех турăн. Тĕлĕнмеле. Асаттене хĕрхентерсе çавăрас терĕн те тухаймарĕ. Епĕ сан çине пăхрăм та, чăтма пултараймарăм, кулса кĕçех хырăм çурăлса кайаччĕ. (*Љубă пек туса*). „Усалăн ан асăн"... Епĕ тата... (*Хăй каланă пек*). „Вакка сикетĕп. Сывă пул"... (*Кулаť*).

Љубă. Есĕ ан кул, Петĕр, епĕ...

Петĕр (*сасартăк кулма чарăнса*). Ну?

Љубă. Сана кавча тухмастăп...

Петĕр. Мĕн вара есĕ, ухмаха йертĕн-и?

Љубă. Сана халех каласа парап.. Есĕ мана йуратнине пĕлетĕп.

Петĕр. Сана вăл çитмест-и мĕн?

Љубă. Çитмест. Колхоз организацилени часах икĕ çул акă, есĕ, Петĕр, çак икĕ çул хушшинче колхоз тулашĕнче çеç çўрерĕн... Асларăсунтан хăрарăн...

Петĕр. Вăл мана кăкăр ĕмекен, сакăр уйăхри ачана, хăй çаварĕнчен тенĕ пек тăрантарса ўстернĕ, йепле-ха ман ăна кўрентермеле? Вăл мансăрăн вилме пултараť... Чăн-чăнах...

Љубă. Пурăнах апла пулсан.

Петĕр. Кулас тетĕн? Хăвах пĕлетĕн: колхоза кĕме вайавлени патăм, нимĕн çине те пăхмарăм... шухăшламарăм та пулчĕ те.

Љубă. Ан çилен, Петĕр, есĕ колхоза пĕр маншăн çеç кĕретĕн пулсан, пире унашкал колхозниксем кирлĕ мар.

Петĕр (*хăраса*). Йепле кирлĕ мар?

Љубă. Кала тўррипе: епĕ мар пулсан, есĕ чăнахах та колхоза кĕместĕнчĕ вĕт?

Петĕр (*çиленсе*). Есĕ ăçтан пĕлетĕн?

Љубă. Çапла пулĕ тесе шухăшлатăп. Санăн çирĕплĕх çук. Есĕ асларăпа мĕнле калаçнине куртăм та, епĕ саншăн куљљантăм Санран асларăна çитме инçе.

Петĕр. Есĕ мана пĕтĕмпех çавăрса çыхрăн.

Љубă. Салтăп акă. Апла пулсан, çапла Петĕнкă?

Петĕр. Йепле?

Љубă. Сана кавча тухмастăп. Тăхтатăп.

Петĕр. Йепледе çаврăнса кайрĕ.

Љубă. Санăн та колхоза кĕме васкама кирлĕ мар. Тĕрĕс-и

Петĕр. Ку ман ĕç (*Вăрăмăн сывласа илсе*). Вăйпа йурат тараймăн. Ех, Љубă! Есĕ мана хытах кўрентертĕн... (*Чарăнчĕ*. Тен кĕркуннехи пек каллах шўť тăватăн пулĕ? (*Кулаť*). Тĕрĕ сех. (*Ыталама тăраť*).

Љубă. Кунче шўť туса мар, Петĕр!.. (*Петĕр йăвăрăн сывласа илсе, тухса кайаť. Шăпчăк йурланă пек шăхăрна илтĕнет. Љубă итлерĕ. Моховик шăхăрса кĕрет*). Епĕ шăп чăк тесе.

Моховик. Шăпчăк вырăнне—епĕ.

Љубă. Аван шăхăратăн.

Моховик. Кайăк сассине, епĕ хам сасса пĕлнĕ пек пĕлетĕп. Кайăксемпе калаçма пултаратăп. Кайăксене йуратас пулаť, кайăк пĕччĕкĕ пулсан та хуçалăхра та пулăшаť, йурлас та параť сана

Љубă. Тĕрĕс ассатте!

Моховик. Манран кайăксем те тĕлĕнеççĕ Шăркаљчă пе шăхăрса йаратăп та, вăл ман çине пăхаť, çуначĕсене саркала тĕлĕнет. (*Шăхăрчĕ*). Мĕн пайан таракансем пек тухса тулна Мĕн пур йалĕ çўремелипех çўрет.

Љубă. Каç ăшă, çутă, ыран канмали кун, ну, уçăлса çў ретпĕр... (*Чейен кулса*). Есĕ тата мĕн çĕрхута çўретĕн?

Моховик (*пўрнипе йунаса*). Ну, ну, ан шарла!

Љубă. Пĕлетĕп, пĕлетĕп.

Моховик (*кулса*). Пĕлех еппин. Петĕрпе калаçса татă тăр-и?

Љубă. Епĕ Петĕре кавча каймастăп.

Моховик. Ну, ну!.. Мĕншĕн апла? Хăвăн çамрăклăхна шел ле! Иртсе кайаť те асăннипех пĕтет. Йуратни те хаљ çеç

Моховик (*сухалне йакатса*). Хăвăн телейне çухататăн

Љубă. Каланă: колхозран тухмастăп.

Љубă. Есĕ ăна ан ырла—хамах пĕлетĕп. Петĕр ачи кала та çук: ĕçлет, тапак туртмасť, шăп хам пек.

Моховик. Мĕншĕн-ха тата хурлатăн?

Љубă. Пĕрте хурламастăп. Епĕ ăна сана ваљљи хăвар тăп .. (*Витлесе*). „Епĕр хамăра-хамăр—колхозниксем епĕр".

Моховик. Çивĕч хĕр. Ой, çивĕч. Апла пулсан пымастăн?

Љубă. Пымастăп.

Моховик. Ну, ну. Маттур! Çирĕп—шăп ман пек. Ку ман килĕшет .. Ырлатăп. (*Шўт туса ыталарĕ*).

Йăвăçсем хушшинчен Алтати тухаť.

Алтати. Аскăнсем! Турра маннă есĕр!

Љубă. Истори!..

Алтати (*Моховике*). Сана пĕр Москвичкă сахал пула пу ларĕ-и, халĕ Љубă сумне çыпçăнасшăн-и?

Љубă. Асанне, мĕн есĕ кирлĕ мара калаçатăн? (*Кулаť*).

Алтати. Есĕ те чунăм, пит аванскер! Ну, Москвичкă па лах . Мускавра тĕрлĕ ирсĕрлĕхе вĕреннĕ, есĕ çамрăк хĕр, ăç кайатăн? Куçусем санăн çут тĕнче çине йепле пăхаççĕ, йепле санăн çивĕт туни сўтĕлсе каймасť?

Љубă. Ăçтан сўтĕлтĕр вăл—каснă çўç?

Алтати. Есĕ ман старике ан тив.

Моховик (*кулса*). Ну, ну, айта, Алтати, вут йевĕрлĕ карчăк.

Алтати. Есĕ хăвăн сухална сыхла—хитре сухална мĕн пур не пĕрчĕн-пĕрчĕн туртса тăпăлтарса пĕтерĕп.. Качча!

Моховик. Епĕ çаван пек.

Алтати. Ут киле. Çывăрма вăхăт.

Моховик (*çилĕлĕ*). Есĕ манпа камандă тума пултаймас тăн. Тăр вырăнта. Камандă итле. Смирно! Сулахай урупа ма тан пусса малала ша-гом арш!

Алтати (*хушнине тăваť*). Тăхта-ха сана!

Моховик. Аç-два, аç-два (*Алтати кайаť*). Йĕркелĕн!

Љубă. Мĕншĕн карчăкна кўрентеретĕн?

Моховик. Ничава, тўссе пăхтăр-ха. Вăл уншăн сийен ма

(*Йулашки çитес номĕрте*)



Хăраман çын

— Итле-ха, ман сана пĕр сăмах каласси пур... вăрттăн сăмах...

Вăл мана пушă пӳлĕме, малти кĕтессе çавăтса пырса сасартăк кăнкăвак пулса кайса, шăппăн каласа илчĕ:

— Тсс... Тахăшĕ утса килни илтĕнет унта.

Чĕрне вĕççĕн утса алăк патне пычĕ те, асăрханса коридорала пăхса илнĕ хыççăн кайала тавăрăнса, лăпланнă сасăпа каларĕ:

— Пĕлетĕн-и... Ах, илтме пултараççĕ... Кăчухне çтенасен те хăлха пулакан, терĕ.

Такам утнă сасăсем илтĕннипе вăл калас сăмахне каллех калаймарĕ. Каллех алăк уçса коридорала пăхрĕ.

— Аха... калатăп такам çӳрет тесе. Ыранах мĕн илтнине каласа пама пултараҫ. Çынни çавăн пекскер...

— Кам вăл?

— Укахви. Урай шăлаканни. Нумай пулмасть месткома суйланнăскер.

— Ну?!

— Мĕн, „ну“. Епĕр вăрттăн калаçнă сăмахсене илтĕ те, ыран ирех кама кирлине каласа кăтартрĕ.

Виççĕмĕш хут алăк уçса коридорала пăхнă хыççăн, кăштах итлекелесе тăчĕ те, çамки çинчи тарне шăлса, каллех ман пата пырса тăрса, калама тытăнчĕ:

— Итле-ха... Ел каланине никама та каламастăп тесе тупа тăватăн-и?

— Каламастăп.

— Турă йатне асăнсах тупа ту. Кам та пулин пĕлсессĕн...

— Йурĕ, тупа тăватăп, турăшăн та, хĕвелшĕн те çакăнта мĕн илтнине никама та каламастăп,—терĕм епĕ ăна лăплантарса.

— Итле-ха, — хăранипе куçĕсене чармакласа йарса, никам илтмеле мар шăппăн калама тытăнчĕ хăйĕн малалахи сăмахĕсене.—Епĕ хăрамасăрах калатăп. Епĕ, ыттисем пек, хăравçă мар. Мана çакăнтах çакса хуччăр, кашни кун темиçешер хут вĕлере-вĕлере тăкчăр, пурĕ пĕрех епĕ хам калас тенине калатăпах.

— Ну, калатăп, калатăп, тетĕн. Ху нимĕн те каламастăн...

Вăл сывлăш çавăрса илнĕ пек пулса, пӳлĕмĕн, мĕн пур кĕтесĕсене куçĕпе виçсе пăхса тухрĕ те, сĕтел айне те пăхса илнĕ хыççăн калама пулнă сăмахне каллех калама тытăнчĕ:

— Епĕ калас... Анчах вăрттăн каланă сăмах пултăр ку. Никама та ан кала... Итле еппин... Пирĕн заведуйушчи, пирĕн заведуйушчи, пирĕн заведуйушчи...

Вăл каллех тытăнса тăчĕ. Унăн пичĕ-куçĕ çине пăхсан, чĕринче пысăк асаплă кĕрешӳ пулса иртни сисĕнчĕ. Йулашкинчен вăл хăйулăхне пухса çитерчĕ те:

— Пирĕн заведуйушчи,—терĕ вăл чарăна-чарăна тухакан сасăпа,—пирĕн заведуйушчи, ман шухăшпа, ухмах, хăйĕн учрежденинче ĕçлекен кадăрсене лайăхрах условисем туса парасшăн тăрăшни чĕрне хури пысăкĕш те палăрмасть...

Унăн мана вăрттăн калас сăмахĕ çавă пулнă.

И. С.

Пуштă йешчĕкĕ

Гришă Распутина.—Псевдониму килĕшӳсĕр. Улăштар. Ерхип çинчен хăвăрăн колхозра тухакан çтена хаçатне çыр.

Хурçă. Чăваш республик тулашĕнчен килнĕ лайăх материалсене „Капкăн“ журналра хавасланса йышăнатпăр. Çырни килĕшӳлĕ пулсан, кĕртмесĕр тăмăпăр.

С. Иванова (Трак р.) „Капкăн“ журналра пиессăсем малала сахал мар пичетленмеле. „Москвичка“ пиесса журналăн 12-мĕш номĕрĕнче пичетленсе пĕтет. Унтан Глебăв çырнă „Ĕç тухмарĕ“ комеди, Чехăв калавĕ тăрăх çырнă пĕр водевил т. ыт. те çапăнмала. Çырăнса илмесĕр ан йулăр.

И. С. Петрова (Куйбышĕв крайĕ)—„Капкăн“ вулакансен конференцине туса иртернĕшĕн сана пысăк тав кӳретпĕр.

Панова.—Есĕ сĕннине хисепе илсе, „Капкăн“ журналра 1936-мĕш çулта кулăшла задачсемпе шухăшласа тупмали вăйăсем тăтăшах пичетлесе пырăпăр.

Феодăрава (Хĕвеланăç Çĕпĕр крайĕ).—Вырăнти тăмпуçсем „Капкăн“ подпискине йышăнмаççĕ пулсассăн, акă çак адрĕспа укçа йарса çырăнма пултаратăн: „Чебоксары. Дом связи, Союзпечать“.

Секретарь и вып. редактор И. ИЛЛАРИОНОВ. За ответ. редактора Ф. АЛЕКСАНДРОВ.

Сдано в производство 22/XI—35 г. Подписано к печати 5/XII—35 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 814. Заказ № 2034

Формат бумаги 1/8. Об'ем 1,25 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 2.350 Из.-газ. «Канаш»



— Ĕçпе те епĕ сан патна...
Пит кӳрентерчĕ пуçана:
Курса пулмарĕ ыррине,
Çаратрĕ колхоз тыррине...
— Супăлгетме ман вăхăт çук,
Кирлех пулсассăн кил ыран!



Пайан килме каларăн та,
Еп килтĕм-ха çав ĕçпелех.
Лаша тăрать ман тупата,
Татса парсамччĕ çав ĕçе,
— Кирлех пулсассăн кил ыран,
Супăлтетме ман вăхăт çук!



Виççĕмĕш кун çӳретĕп ĕнтĕ,
Анран йарать ку тунката!
Йурать пулсан ислетĕттĕм,
Тăхта-ха, пырăн пирн пата.

— Ма машкăлан-ха ес манран!
Капла ес чăн та, тупата,
Çĕр хут усал пуçанаран.
Чикен мана ес тупăка.
— Супăлтетме ман вăхăт çук,
Кирлех пулсассăн кил ыран!



Сана, сана-и пуçăра,
Санах хамран кулгармăш-ха.



Аслă çын: — Мĕншĕн-ха ес çак çынна
Ерне таран çӳреттерен?..
— Ма каламарăн малтанах,
Пĕлмен еп санăн хуйхуна.
Вĕт ку ĕçе тватăм кунах